Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 МАРТ 26 ШАМАТКУН

69 (4882)-мĕш №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухать ● ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ ● Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати.
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редактăрăн 0—67
Ред. заместителĕн 0—88
Редакци секретарĕн 4—40
Дежурнăйăн 6—23

Йалти политикăлă-массăлă ĕç

ПСК(б)П Тĕп Комитечĕн 1937 çулхи февраль-март уйăхĕсенче пулнă Пленумĕнче Сталин йулташ парти организацийĕсене хуçалăх кампанийĕсемпе каçса кайни ан пултăр, партилĕ-политикăлă ыйтусене хака хуманни тата манăçа хăварни ан пултăр, тесе асăрхаттарнă. „Хуçалăх ăнăçăвĕсем хăйсем те,—тенĕ Сталин йулташ,—вĕсен çирĕплĕхпе нумайлăха пырасси пĕтĕмĕшпех те йалтах партилĕ-организацилĕ тата партилĕ-политикăлă ĕç ăнăçĕвĕсенчен килеççĕ.“

Йулашки вăхăтри фактсенчен йалхуçалăхлă районсенчи парторганизацисем пит нумайĕшĕ Сталин йулташăн çав кăтартăвĕсенчен кирлĕ выводсене туманни курăнчĕ. Вĕсем, çураки валли вăрлăхсем, машинсем, ĕçхатĕрĕсем йамăтласа хурас тĕлĕшпе ĕçлесе, колхозниксем хушшинчи, совхозсенчи рабочисем хушшинчи политикăлă-массăлă ĕççене манăçа хăварнă. Çавăн пек тунипе пирĕн партин пит паха принципĕсенчен пĕрине пăснă, вăл принцип çапла: массăсемпе йаланах чи тачă çыхăну тытмала, массăсене политика йенĕпе çутта кăларас тĕлĕшпе, вĕсене большевикла хăватпа вĕрентес тĕлĕшпе ывăнма пĕлмесĕр ĕçлесе пымала. Массăсем хушшинчи политикăла ĕçе манăçа хăварнă пирки акă мĕн пулса тăнă: çав районсенче çуракине ирттерме те çителĕклĕ хатĕрленмен.

„Политикăлă-массăлă ĕç йавашланине нимĕçпе те тĕрĕсе кăларма çук. Çав ĕçе организацилесе, йĕркелесе йама чи кирли çакă пулать,—партин сăмахне колхозниксен йышлă массисен хушшине илсе пыма пултаракан тĕрĕсленнĕ çынсем кирлĕ. Йалта çав кадрсем пур-и? Çапла, пур. Вĕсем, чи малтан, колхозсенче тата совхозсенче ĕçлекен коммуниссем, комсомолецсем, сочувствуйущисем. Тата вĕсем те анчах мар!

ССР Союзĕн Верховнăй Советне суйламали кампани пирĕн парти тавра партире тăман пит ырă активăн анлă сийĕ пуррине кăтартса пачĕ. Суйлав кампанийĕ вăхăтĕнче массă хушшинче пит пысăк агитацилĕ ĕçе калама çук ăста туса пынă партире тăман колхозниксемпе колхозницăсем, совхозсенчи рабочисемпе работницăсем вуншар пинĕн палăрчĕç. Çав кадрсем—ылтăн пекех хаклă çынсен фончĕ пулса тăраççĕ, вĕсем, хăйсемпе тĕрĕс усă курсан, пит паха та пысăк ĕçсем тума пултараççĕ.

Нумай парторганизацисем çав активиссен кадрĕсене çухатса пĕтернĕ. Нумай пулмасть Орджоникидзе крайĕнчи Ново-Александровски районра массăлă агитаци ĕçĕ мĕнле пынине тĕрĕслесе тухнă. Партин крайри комитечĕн çакна палăртса каламала килнĕ: „ССР Союзĕн Верховнăй Совечĕн суйлавĕ вăхăтĕнче ÿссе çитĕннĕ вырăнти партипе комсомол тата партире тăман актива—агитаторсене, калаçусем ирттерекенсене, хаçат-журналсем вуласа паракансене ĕçе хутшăнтарман (сăмахран, „Северо-Восточный“ колхозра ССР Союзĕн Верховнăй Совечĕн суйлавĕ вăхăтĕнче ĕçленĕ 21 активисран халь 3-шĕ çеç ĕçлеççĕ).

Çав вăхăтрах ку кадрсем пĕтĕм массăлă-политикăлă ĕçе йĕркелесе йарас çĕрте татăклă вырăн йышăнса тăраççĕ. Хаçат-журнал вуласа паракан, калаçу ирттерекен—йалти агитаторсен кадрĕсем хушшинче тĕп вырăнта тăрать. Унпа ĕçлес тĕлĕшпе парти организацисен пит тимлĕ пулмала. Анчах çавă ĕнтĕ час-часах курăнмас-те.

Парти организацисем колхозсенчи хаçат-журналсем вуласа паракансене сахал пĕлеççĕ, вĕсемпе йапăх ĕçлеççĕ, вĕсене уйăрасси çине час-часах формальнă пăхаççĕ. „Победа пролетариата“ йатлă колхозра (Краснозоренск районĕ, Орлов облăçĕ) колхозниксем хаçат вулама тăтăшах пухăнаççĕ, анчах вĕсем вуласа пама уйăрнă çын патне мар, тепĕр рйадовой колхозник патне пухăнаççĕ, вăл лайăх вуласа кăтартма та тата кăштах ăнлантарса пама та пĕлет. Çав колхозникĕн йачĕ ĕнтĕ хаçат-журналсем вуласа паракансен спискинче çук.

Политикăлă-массăлă ĕççене туса пымали тĕп вырăн—бригадă, звено, трактор отрйачĕ, аггрегат пулмала. Шăп çавăнта ĕнтĕ колхозниксен массисене большевикла ăнлантарас ĕçе туллин туса пыма, вĕсен ыйтăвĕсене тата интересĕсене тĕплĕн вĕренме, партилĕ-политикăлă ĕçе чи лайăххăн йĕркелесе йама май пур. Бригадăсем уйри ĕççене тума тухсан политикăлă-массăлă ĕççене те пĕтĕмпех уйрах туса пымала. Çав вăхăтра ĕçлеме темскерле ăрасна формăсем шухăшласа кăларма кирлĕ мар. Хаçатсене сасăпа вуласа парасси, калаçусем ирттересси, ыйтусемпе ответсен каçĕсем—çаксем ĕнтĕ политикăлă ĕçĕн лайăх, чи витĕмлĕрех формисем пулса тăраççĕ, колхозниксен йышлă массисем хушшинче çав формăсемпе ĕçлесен чи ансатрах пулать. Чи малтан çав формăсемпе ĕнтĕ сарлакан усă курмала.

Анчах, ĕçе уйа куçарнипе пĕр вăхăтрах, йалта, килкартишĕнче ĕçлеме йулнă колхозниксемпе совхоз рабочийĕсем хушшинче те ĕçе вăйлатмала. Çураки вăхăтĕнче колхозниксен пĕр пайĕ çеç уйра ĕçлет, чылай пысăк пайĕ йалта пулать.

Йалта культурăлă тĕп вучах вулав çурчĕ пулса тăрать. Клубсем тата вулав çурчĕсем 63 пин ытла шутланаççĕ, анчах, пит шел те, вĕсенчен нумайĕшĕ хут çинче çеç шутланса тăраççĕ. Иртнĕ çулта тырпул пит вăйлă пулнă май, хăшпĕр руководителсем хăшпĕр çĕрте колхоз клубĕсемпе вулав çурчĕсене тырă хума складсем тунă. Çавăн пек фактсем Воронеж облăçĕнче, Орджоникидзе крайĕнче тата ытти хăшпĕр çĕрте те пур. Çавăнпала йалти политикăлă-массăлă ĕçе пит пысăк сийен кÿни каламасăрах та курăнса тăрать.

Вулав çурчĕ çук çĕрте массăлă-политикăлă ĕçе организацилеме май çук тесе шухăшлани йанăш пулнă пулĕччĕ. ССР Союзĕн Верховнăй Советне суйланă вăхăтра колхозник агитаторсем парти [illegible]лăх хушшине туллин сармали лайăх формă турĕç. Вăл—вуншар килсенче тата çирĕмшер килсенче ĕçлесси. Çак формăна, ăна манмала мар пулин те, нумай районсенче манса кайнă. Çав формăпа усă курма халех тата пур çĕрте те тытăнас пулать.

Таврари пурнăç, хамăр çĕршывра тата урăх çĕршывсенче пулса пыракан событисем массăсем хушшинче политикăлă ĕçе туса пыма пуйан çимĕç параççĕ,—çав ĕçе ăна паллă тĕллевпе туса пымала. Йатне тума çеç вуласа пани, йатне тума çеç калаçу ирттерни статистика отчочĕсенче пысăк цифрсем пулччăр тесе çеç тăрăшни пире кирлĕ мар. Пире çакăн пек политикăлă-массăлă ĕç кирлĕ: вăл—колхозниксен, совхозсенчи рабочисен сыхăлăхне ÿстертĕр, массăсене политика йенĕпе çутта кăларма пулăштăр, социалисăмла ăмăртупа стахановла йухăмăн йалавне çÿле çĕклеме пулăштăр, производствăлă плансене тултарма, социалисăмла йалхуçалăхĕнче çĕнĕрен çитĕнÿсем туса пыма пулăштăр. Вăл çавăн пек чухне тин тухăçлă пулать, партишĕн, колхоз стройĕшĕн, совет государствишĕн усăлă пулать.

Колхозниксемпе совхозсенчи рабочисем пĕтĕм тĕнчере пулса пыракан событисемпе, хамăр çĕршыври социалисăм строителствин ыйтăвĕсемпе калама çук пысăккăн интересленеççĕ. Часах акă союзлă республикăсен Верховнăй Совечĕсен суйлавĕсем пулаççĕ. Çаксем пурте ĕнтĕ массăсем хушшинче политикăлă ĕçе уйрăмăнах анлăн сарса йама хушаççĕ.

Хальхи вăхăтра пирĕн çĕршывăн пит пысăк территорийĕнче пур çĕрте те çуракине хатĕрленес ĕç хĕрÿлĕн пырать. Союзăн кăнтăр йенчи районĕсем акма пуçланă. Тракторсем, вăрлăхсем, лашасем тĕлĕшпе, мĕн пур хуçалăх ыйтăвĕсем тĕлĕшпе тăрăшса ĕçленĕ вăхăтрах, партилĕ-политикăлă ĕçе пĕр минутлăха та манма йурамасть, вăл ĕçе тумасăр ăнăçу тума май çук. Парти Тĕп Комитечĕн февраль-март уйăхĕсенче пулнă Пленумĕнче (1937 ç.) Сталин йулташ çапла каланă:

„Пирĕн партири йулташсем хуçалăх ăнăçĕвĕсемпе каçса кайса, политикăран пăрăнса пыни—ку вăл пире хакла ларнă хăрахйенлĕх пулнă. Халĕ пирĕн хăшпĕр йулташсем вара, партилĕ-политикăлă ĕçе вăйлатма тытăнса хуçалăхран пăрăнма шухăш тытсан,—ку вăл тепĕр хăрахйенлĕх пулĕ, вăл ĕлĕкхинчен кайа ларĕ. Пĕр йенчен тепĕр йенне кайса çапăнма йурамасть. Политикăна хуçалăхран уйăрма йурамасть“.

Парти организацийĕсен пурин те çав сталинла кăтартăва асра тытмала, пĕтĕм ĕççене çав кăтартăва пăхăнса йĕркелемеле,—çуракине ирттернĕ çĕрте политикăлă ĕççене кирлĕ пек туса пымала тата вăл ĕçе çывăхри вăхăтра пуçланакан кампанисемпе—союзлă тата автономлă республикăсен суйлав кампанийĕсемпе тĕрĕс çыхăнтарса туса пымала.

„Правда“.

1938 çулта йĕтĕн тата кантăр контрактацилемели план çинчен

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ йĕтĕнпе кантăр тухăçĕ тата вĕсене хатĕрлес ĕç пачах çителĕксĕр пулса пырать, тесе йышăнаççĕ.

Йĕтĕн тата кантăр хатĕрлес ĕç çителĕксĕр пулса пынин тĕп сăлтавĕсенчен пĕри контрактаципе хатĕрлес ĕçе ик тĕрлĕ планлас сăтăрла практикă пулнă, çав вăхăтрах контрактацилемели плана тата гектартан памали нормăсене хатĕрлев планĕнчен чылайăх ÿстерсе туса пынă. Çавăн пирки вара колхозсемпе колхозниксем государствăна памали плана ытлашшипех тултарнăшăн памала тунă преми-надбавкăсене илеймен, ку вăл колхозсемпе колхозниксем йĕтĕнпе кантăртан илекен тупăшсем пĕчĕкленесси патне илсе пынă тата колхозсемпе колхозниксен çав культурăсене ĕрчетес интересне пĕтерсе пынă.

Йĕтĕнпе кантăр тухăçлăхне чи васкавлăн хăпартас шутпа, ССР Союз Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Тĕпкомĕ йĕтĕн тата кантăр хатĕрлессине организацилессинчи çак сийенлĕ практикăна пĕтерсе хума, йĕтĕнпе кантăр сÿсĕ тата тылламан кантăрпа йĕтĕне хатĕрленĕ чух тÿлемели хаксене хăпартма, гектартан памали нормăсене пĕчĕклетме тата преми-надбавкă парас йĕркене контрактаци планне тултарассине тата ытлашшипех тултарассине, колхозсемпе колхозниксем йĕтĕнпе кантăр панăшăн преми-надбавкăсем илессине çăмăллатмала туса улăштарма кирлĕ, тесе шутлаççĕ.

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Тĕпкомĕ çапла йышăнаççĕ:

I. Йĕтĕн контрактацилесси тăрăх

1. Халиччен пулнă нормăсене пĕчĕклетсе, контрактаци тăрăх йĕтĕн сÿсĕ тата йĕтĕн вăрри гектартан парассин çакăн пек çĕнĕ нормисене çирĕплетес (килогрампа—облăç, край, республикă тăрăх вăтам шутпа):

	Йĕтĕн—сÿспе шутласа	Йĕтĕн вăрри
Алтай крайĕ тăрăх	70	75
Архангельск облăçĕ тăрăх	90	65
Башкир АССР тăрăх	40	55
Вологда облăçĕ тăрăх	110	65
Горький облăçĕ тăрăх	110	80
Иваново облăçĕ тăрăх	100	70
Иркутск облăçĕ тăрăх	50	35
Калинин облăçĕ тăрăх	170	90
Киров облăçĕ тăрăх	100	60
Коми АССР тăрăх	100	60
Краснойарск крайĕ тăрăх	60	60
Ленинград облăçĕ тăрăх	140	60
Мари АССР тăрăх	100	60
Мускав облăçĕ тăрăх	100	70
Новосибирск облăçĕ тăрăх	70	70
Омск облăçĕ тăрăх	70	65
Орлов облăçĕ тăрăх	70	70
Рйазань облăçĕ тăрăх	50	80
Свердловск облăçĕ тăрăх	60	60
Смоленск облăçĕ тăрăх	150	90
Тутар АССР тăрăх	40	40
Тула облăçĕ тăрăх	50	80
Удмурт АССР тăрăх	100	60
Чăваш АССР тăрăх	100	65
Йарославль облăçĕ тăрăх	170	60
Украинă ССР тăрăх	100	80
Белоруççи ССР тăрăх	130	100

ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн планĕпе вăрлăх тума сайран акнă йĕтĕне контрактацилени тăрăх сÿс тата тылламан йĕтĕн парас нормăсем район валли тунă вăтам нормăн çурри чухлĕ пулмала.

2. Акмали çĕр талккишĕн планĕпе тата гектартан памали нормăсемпе килĕшсе, 1938 çулта акăнакан йĕтĕне контрактацилес плана çакăн пек хисеппе тăвас:

Йĕтĕн—долгунеца сÿспе шутласа 222.230 тоннă.

Вăл шутран:

Тылламан йĕтĕн 1,3-мĕш вăтам номĕрлĕ сÿс çине куçарса 137230 тоннă.

Килте алăпа ĕçлесе хатĕрленĕ 9,5-мĕш вăтам номĕрлĕ йĕтĕн сÿсĕ 85.000 тоннă.

Йĕтĕн-долгунец вăрри 140.335 тоннă.

3. Йĕтĕн сÿсне тата йĕтĕн вăррине контрактацилес плана облăçсем, крайсем, республикăсем тăрăх çакăн пек валеçсе панине çирĕплетес:

	Пĕтĕмпе сÿспе шутласа (тоннăпа)	Вăл шутран					Вăрлăх тоннăпа
		Йĕтĕн сÿсĕ			Тылламан йĕтĕн		
		Тоннăпа	Вăтам номĕр	сÿспе шутласа тоннăпа	йăвăрĕш тоннăпа	Вăтам номĕр	
Алтай крайĕ	1330	270	9,0	1060	4770	1,3	1420
Архангельск облăçĕ	2250	1150	10,5	1100	4950	1,4	1620
Башкир АССР	360	360	6,5	—	—	—	500
Вологда облăçĕ	9350	3750	10,5	5600	25200	1,3	5520
Горький облăçĕ	5500	2500	8,5	3000	13500	1,2	4000
Иваново облăçĕ	5600	2700	9,0	2900	13500	1,2	3920
Иркутск облăçĕ	200	100	7,5	100	450	1,2	140
Калинин облăçĕ	51000	17000	10,5	34000	153000	1,4	27000
Кировск облăçĕ	13600	5000	8,0	8600	38700	1,1	8160
Коми АССР	500	150	10,0	350	1575	1,3	800
Краснойарск крайĕ	1020	200	9,0	820	3690	1,3	1020
Ленинград облăçĕ	19600	5400	9,5	14200	63900	1,3	8400
Мари АССР	1600	400	7,0	1200	5400	1,1	960
Мускав облăçĕ	3300	1000	9,5	2300	10350	1,3	2310
Новосибирск облăçĕ	2870	1000	9,0	1870	8415	1,3	2870
Омск облăçĕ	3150	790	8,5	2360	10620	1,2	2925
Орлов облăçĕ	1890	1590	7,0	300	1350	1,1	1900
Рйазань облăçĕ	350	100	8,5	250	1125	1,2	560
Свердловск облăçĕ	1920	200	7,5	1720	7740	1,1	1920
Смоленск облăçĕ	37500	15000	9,5	22500	101250	1,4	22500
Тутар АССР	640	440	6,5	200	900	1,0	640
Тула облăçĕ	700	700	7,0	—	—	—	1100
Удмурт АССР	6500	2700	8,0	3800	17100	1,1	3900
Чăваш АССР	300	100	7,0	200	900	1,2	200
Йарославль облăçĕ	14200	4800	10,0	9400	42300	1,3	7750
Украинă ССР	11000	9800	10,0	1200	5400	1,3	8800
Белоруççи ССР	26000	7800	9,0	18200	81900	1,3	20000
Пĕтĕмпе:	222230	85000	9,5	137230	617535	1,3	140335

4. 1938 çулта акăнакан йĕтĕнрен пуçласа, 10-мĕш номĕрлĕ йĕтĕн сÿсĕшĕн хатĕрлев хакне—центнершăн 20 тенкĕ тата 1,25 номĕрлĕ тылламан йĕтĕншĕн—центнершăн 5 тенкĕ ÿстерсе памала тăвас, унсăр пуçне, йĕтĕн сÿсĕ тата тылламан йĕтĕн пысăкрах номĕрлĕ пулсан, çавăнпа пĕрлех вĕсен хакне те нумайрах ÿстерсе тата, номĕр пĕчĕкрех пулсан, хакне те сахалтарах ÿстерсе памала тăвас.

Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕ тăратнă йĕтĕн сÿсĕн тата тылламан йĕтĕнĕн уйрăм номĕрĕсем тăрăх тÿлемели хаксене çирĕплетес.

Вырăнта лайăхлатнă йĕтĕн заповедникĕсенчен хатĕрлекен йĕтĕн вăрлăхĕсемшĕн суртлă йĕтĕн вăрлăхĕн хакĕсемпе тÿлемеле тăвас.

5. Йĕтĕн сÿсне йе тылламан йĕтĕне контрактаци тăрăх парас плана ытлашшипех тултарнă колхозсене планран ирттерсе панă пĕтĕм продукцишĕн хатĕрлев хакĕ çумне хушса çак хисепсемпе преми-надбавкă памала тăвас:

а) Архангельск, Вологда, Ленинград, Калинин, Мускав, Смоленск, Иваново, Йарославль, Горький облăçĕсем, Коми АССР тата Белоруççи ССР тăрăх:

планпа пĕр гектартан 1 центнертан ытла мар йĕтĕн сÿсĕ (йе 5 центнертан ытла мар тылламан йĕтĕн) памала пулсан, планран ирттерсе панă пĕтĕм хисепшĕн—100 процент чухлĕ;

пĕр гектартан 1 центнер ытла, анчах 1,5 центнертан ытла мар йĕтĕн сÿсĕ (йе 5 центнер ытла, анчах 7,5 центнертан ытла мар тылламан йĕтĕн) памала пулсан, планран ирттерсе панă пĕтĕм хисепшĕн—200 процент чухлĕ;

планпа пĕр гектартан 1,5 центнер, анчах 2 центнертан ытла мар йĕтĕн сÿсĕ (йе 7,5 центнер ытла, анчах 10 центнертан ытла мар тылламан йĕтĕн) памала пулсан, планран ирттерсе панă пĕтĕм хисепшĕн—250 процент чухлĕ;

планпа пĕр гектартан 2 центнер ытла, анчах 2,5 центнертан ытла мар йĕтĕн сÿсĕ (йе 10 центнер ытла, анчах 12,5 центнертан ытла мар тылламан йĕтĕн) памала пулсан, планран ирттерсе панă пĕтĕм хисепшĕн—300 процент чухлĕ;

планпа пĕр гектартан 2,5 центнер ытла йĕтĕн сÿсĕ (йе 12,5 центнер ытла тылламан йĕтĕн) памала пулсан, гектартан çав шутран ирттерсе панă пĕтĕм хисепшĕн, контрактаци планне мĕн чухлĕ тултарнине пăхмасăр,—400 процент чухлĕ.

б) Ытти мĕн пур облăçсем, крайсем тата республикăсем тăрăх:

планпа пĕр гектартан 0,7 центнертан ытла мар йĕтĕн сÿсĕ (йе 3,5 центнертан ытла мар тылламан йĕтĕн) памала пулсан, планран ирттерсе панă пĕтĕм хисепшĕн—100 процент чухлĕ;

планпа пĕр гектартан 0,7 центнертан ытла, анчах 1 центнертан ытла мар йĕтĕн сÿсĕпе (йе 3,5 центнер ытла, анчах 5 центнертан ытла мар тылламан йĕтĕн) памала пулсан планран ирттерсе панă пĕтĕм хисепшĕн—200 процент чухлĕ;

планпа пĕр гектартан 1 центнер ытла, анчах 1,5 центнертан ытла мар йĕтĕн сÿсĕ (йе 5 центнер ытла, анчах 7,5 центнертан ытла мар тылламан йĕтĕн) памала пулсан, планран ирттерсе панă пĕтĕм хисепшĕн—250 процент чухлĕ;

планпа пĕр гектартан 1,5 центнер ытла, анчах 2 центнертан ытла мар йĕтĕн сÿсĕ (йе 7,5 центнер ытла, анчах 10 центнертан ытла мар тылламан йĕтĕн) памала пулсан, планран ирттерсе панă пĕтĕм хисепшĕн—300 процент чухлĕ;

планпа пĕр гектартан 2 центнер ытла йĕтĕн сÿсĕ (йе 10 центнер ытла тылламан йĕтĕн) памала пулсан, гектартан çав шутран ирттерсе панă пĕтĕм хисепшĕн, контрактаци планне мĕн чухлĕ тултарнине пăхмасăр,—400 процент чухлĕ.

6. Контрактаци тăрăх пĕр центнер ытла йĕтĕн сÿсĕ (йе 5 центнер ытла тылламан йĕтĕн) памала пулсан, гектартан çав шутран ирттерсе панă пĕтĕм продукцишĕн хатĕрлев хакĕ çумне, контрактаци планне мĕн чухлĕ тултарнине пăхмасăр, 100 процент чухлĕ хушса тÿлемеле тăвас. Контрактаци планне ытлашшипех тултарнă пулсан, договор çинче кăтартнă чухлĕ преми-надбавкă тÿлемеле.

7. Государствăна панă пĕтĕм йĕтĕн сÿсне, вăл 18-тан пуçласа 24-на çити номĕрлĕ пулсан (кунта 24-мĕш номĕр те кĕрет), колхозсем контрактаци обйазателствисене пурнăçланă çĕре пĕрре çурă хисеппе шута илмели, йĕтĕн сÿсĕ 24-мĕш номĕрлинчен те лайăхрах пулсан, 2 хут ÿстерсе шута илмеле (йăвăрĕш тата центнер-номĕр тăрăх). Государствăна панă тылламан йĕтĕне, вăл 3 тата ытларах номĕрлĕ пулсан, 25 процент чухлĕ хушса шута илсе колхозсене çырса памала (йăвăрĕш тата центнер-номĕр тăрăх).

8. Йĕтĕн вăрлăхне парас плана ытлашшипех тултарнăшăн хатĕрлев хакĕ çумне çакăн чухлĕ хисеппе преми-надбавка памала тăвас:

планпа пĕр гектартан 2 центнер ытла мар вăрлăх памала пулсан, планран ирттерсе панă пĕтĕм хисепшĕн—100 процент чухлĕ;

планпа пĕр гектартан 2 центнер ытла, анчах 3 центнертан ытла мар памала пулсан, планран ирттерсе панă пĕтĕм хисепшĕн—200 процент чухлĕ;

планпа пĕр гектартан 3 центнер ытла памала пулсан, гектартан çав шутран ирттерсе панă пĕтĕм хисепшĕн, контрактаци планне мĕн чухлĕ тултарнине пăхмасăр,—300 процент чухлĕ.

II. Кантăр контрактацилес тĕлĕшпе

9. Контрактаци тăрăх гектартан кантăр вăрри тата сÿс парассин çак нормисене çирĕплетес (килогрампа—облăç, край, республикă тăрăх вăтам шутпа):

	Кантăр сÿсĕ	Кантăр вăрлăхĕ
Алтай крайĕ тăрăх	27	42
Башкир АССР тăрăх	20	20
Воронеж облăçĕ тăрăх	28	22
Горький облăçĕ тăрăх	94	90
Иркутск облăçĕ тăрăх	27	27
Краснойарск крайĕ тăрăх	29	35
Куйбышев облăçĕ тăрăх	65	72
Курск облăçĕ тăрăх	72	85
Мари АССР тăрăх	70	67
Мордва АССР тăрăх	85	89
Новосабирск облăçĕ тăрăх	30	43
Омск облăçĕ тăрăх	30	47
Орлов облăçĕ тăрăх	95	90
Рйазань облăçĕ тăрăх	48	48
Свердловск облăçĕ тăрăх	30	50
Смоленск облăçĕ тăрăх	45	55
Тамбов облăçĕ тăрăх	80	77
Тутар АССР тăрăх	30	22
Тула облăçĕ тăрăх	35	44
Чăваш АССР тăрăх	86	78
Украинă ССР тăрăх	100	95
Белоруççи ССР тăрăх	80	63

ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн планĕсем тăрăх çĕнĕ вăрлăх тума акнă кантăрăн вăррине контрактацилеççĕ.

10. Акмали çĕр талккăшĕн планĕпе тата гектартан памали нормăсемпе килĕшсе, 1938 çулта акăнакан кантăра контрактацилес плана çакăн пек хисеппе çирĕплетес:

Кантăр сÿсĕ 39270 тоннă, вăл шутран: 0,75 вăтам номĕрлĕ тылламан кантăр сÿспе шутласан—23600 тоннă;

5,2 номĕрлĕ кантăр сÿсĕ—15670 тоннă;

кантăр вăрри—32400 тоннă.

11. Кантăр контрактацилес плана облăçсем, крайсем тата республикăсем тăрăх çакăн пек валеçнине çирĕплетес:

	Сÿспе шутласан пĕтĕмпе тоннăпа	ВĂЛ ШУТРАН					Кантăр вăрлăхĕ
		Кантăр сÿсĕ		Тылламан кантăр			
		Тоннăпа	вăтам номĕр	Сÿспе шутласа тоннăпа	Хăйĕн йăвăрĕш тоннăпа	Вăтам номĕр	
Алтай крайĕ	640	140	1,9	500	3950	0,72	900
Башкир АССР	500	300	4,7	200	1300	0,68	500
Воронĕж облăçĕ	250	150	4,9	100	650	0,68	200
Горький облăçĕ	1600	400	5,1	1200	7800	0,72	1300
Иркутск облăçĕ	150	50	5,0	100	650	0,72	150
Краснойарск крайĕ	490	90	5,2	400	2600	0,75	600
Куйбышев облăçĕ	900	300	4,9	600	3900	0,68	1000
Курск облăçĕ	4970	1270	5,0	3700	24050	0,72	5000
Мари АССР	210	210	4,9	—	—		200
Мордва АССР	3600	1700	5,0	1900	12350	0,72	3000
Новосибирск обл.	550	150	4,9	400	2600	0,72	800
Омск облăçĕ	450	150	5,1	300	1950	0,72	700
Орлов облăçĕ	8200	3000	5,3	5200	33800	0,77	6600
Рйазань облăçĕ	500	200	5,1	300	1950	0,74	500
Свердловск облăçĕ	150	50	4,9	100	650	0,75	250
Тамбов облăçĕ	2400	700	5,0	1700	11500	0,70	1800
Смоленск облăçĕ	250	250	5,3	—	—	—	300
Тутар АССР	540	540	4,7	—	—	—	400
Тула облăçĕ	150	150	4,8	—	—	—	200
Чăваш АССР	550	350	5,1	200	1300	0,72	500
Украина ССР	10300	4000	5,4	6300	40950	0,78	6000
Белоруççи ССР	1920	1520	5,8	400	2600	0,78	1500
Пĕтĕмпе:	39270	18670	5,2	23600	153400	0,75	32100

12. 1938 çулта акăнакан кантăртан пуçласа, 5-мĕш номĕрлĕ кантăр сÿсĕшĕн хатĕрлев хакĕсене—центнершăн 20 тенкĕ, 0,7 номĕрлĕ тылламан кантăршăн центнершăн 4 тенкĕ ÿстерсе памала тăвас, унсăр пуçне, кантăр сÿсĕ тата тылламан кантăр пысăкрах номĕрлĕ пулсан, çавăнпа пĕрлех вĕсен хакне те нумайрах ÿстерсе тата,

(Йулашки 2-мĕш страницăра).

1938 ҫулта йӗтӗн тата кантӑр контрактацилемели план ҫинчен

ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗпе ПСК(б)П Тӗп Комитечӗ йышӑннӑ

ПОСТАНОВЛЕНИ

(Йулашки)

номӗр пӗчӗкрех пулсан вӗсен хакне те сахалтарах ӳстерсе памала тӑвас. Хатӗрлев Халӑх Комиссариачӗ кантӑр сӳсӗн тата тылламан кантӑрӑн уйрӑм номӗрӗсем тӑрӑх тӑратнӑ хаксене ҫирӗплетес.

13. Кантӑра контрактациленӗ тӑрӑх парас плана хисеп йенчен тата пахалӑх тӗлӗшпе ытлашшипех тултарнӑ колхозсемпе колхозниксене планран иртерсе панӑ пӗтӗм продукцишӗн хатӗрлев хакӗ ҫумне ҫакӑн пек хисеппе хушса преми-надбавкӑсем памала тӑвас:

а) Смоленск, Орлов, Курск, Горький, Тамбов, Куйбышев, Чернигов, Харьков, Полтавӑ облӑҫӗсем, Мордва, Чӑваш, Мари АССР-сем тата Белоруҫҫи ССР тӑрӑх:

планпа пӗр гектартан 0,7 центнертан ытла мар кантӑр сӳсӗ (йе 4,5 центнертан ытла мар тылламан кантӑр) памала пулсан, планран иртерсе панӑ пӗтӗм хисепшӗн—100 процент чухлӗ;

планпа пӗр гектартан 0,7 центнер ытла, анчах 1,2 центнертан ытла мар кантӑр сӳсӗ (йе 4,5 центнер ытла, анчах 7,8 центнертан ытла мар тылламан кантӑр) памала пулсан, планран иртерсе панӑ пӗтӗм хисепшӗн—200 процент чухлӗ;

планпа пӗр гектартан 1,2 центнер ытла, анчах 1,6 центнертан ытла мар кантӑр сӳсӗ (йе 7,8 центнер ытла, анчах 10,5 центнертан ытла мар тылламан кантӑр) памала пулсан, планран иртерсе панӑ пӗтӗм хисепшӗн—250 процент чухлӗ;

планпа пӗр гектартан 1,6 центнер ытла, анчах 2 центнертан ытла мар кантӑр сӳсӗ (йе 10,5 центнер ытла, анчах 13 центнертан ытла мар тылламан кантӑр) памала пулсан, планран иртерсе панӑ пӗтӗм хисепшӗн—300 процент чухлӗ;

планпа пӗр гектартан 2 центнер ытла кантӑр сӳсӗ (йе 13 центнер ытла тылламан кантӑр) памала пулсан, гектартан ҫав шутран иртерсе панӑ пӗтӗм хисепшӗн, контрактаци планне мӗн чухлӗ пурнӑҫланине пӑхмасӑр,—400 процент чухлӗ.

б) Ытти мӗн пур облӑҫсем, крайсем тата республикӑсем тӑрӑх:

планпа пӗр гектартан 0,5 центнертан ытла мар сӳс йе 3,2 центнертан ытла мар тылламан кантӑр памала пулсан, планран иртерсе панӑ пӗтӗм хисепшӗн—100 процент чухлӗ;

планпа пӗр гектартан 0,5 центнертан ытла, анчах 0,8 центнертан ытла мар сӳс (йе 3,2 центнертан ытла, анчах 5,2 центнертан ытла мар тылламан кантӑр) памала пулсан, планран иртерсе панӑ пӗтӗм хисепшӗн—200 процент чухлӗ;

планпа пӗр гектартан 0,8 центнер ытла, анчах 1,1 центнертан ытла мар сӳс (йе 5,2 центнер ытла, анчах 7,0 центнертан ытла мар тылламан кантӑр) памала пулсан, планран иртерсе панӑ пӗтӗм хисепшӗн—250 процент чухлӗ;

планпа пӗр гектартан 1,1 центнер ытла, анчах 1,5 центнертан ытла мар сӳс (йе 7,0 центнертан ытла, анчах 9,8 центнертан ытла мар тылламан кантӑр) памала пулсан, планран иртерсе панӑ пӗтӗм хисепшӗн—300 процент чухлӗ;

планпа пӗр гектартан 1,5 центнер ытла сӳс (йе 9,8 центнер ытла тылламан кантӑр) памала пулсан, гектартан ҫав шутран иртерсе панӑ пӗтӗм хисепшӗн, контрактаци планне мӗн чухлӗ тултарнине пӑхмасӑр,—400 процент чухлӗ.

14. Контрактаци тӑрӑх сӳс парас ин норми 0,7 центнер ытларах (йе тылламан кантӑр парас нормӑ 4,5 центнер ытларах) пулсан, гектартан ҫак хисепрен иртерсе панӑ пӗтӗм продукцишӗн хаҫхи-вӑхӑтри-хатӗрлев хакӗ ҫумне, контрактаци планне мӗн чухлӗ тултарнине пӑхмасӑр, 100 процент чухлӗ хушса тӳлемеле тӑвас. Контрактаци планне ытлашшипех тултарнӑшӑн договор ҫинче кӑтартнӑ преми-надбавкӑна параҫҫӗ.

15. Кантӑр вӑрри парас плана ытлашшипех тултарнӑшӑн хатӗрлев хакӗ ҫумне ҫакӑн чухлӗ хисеппе преми-надбавкӑ памала тӑвас:

планпа пӗр гектартан 2 центнертан ытла мар памала пулсан, планран иртерсе панӑ пӗтӗм хисепшӗн—100 процент чухлӗ;

планпа пӗр гектартан 2 центнер ытла, анчах 3 центнертан ытла мар памала пулсан, планран иртерса панӑ пӗтӗм хисепшӗн—200 процент чухлӗ;

планпа пӗр гектартан 3 центнер ытла памала пулсан, гектартан ҫак шутран иртерсе панӑ пӗтӗм хисепшӗн, контрактаци планне мӗн чухлӗ пурнӑҫа кӗртнине пӑхмасӑр,—300 процент чухлӗ.

III. Йӗтӗнпе кантӑршӑн та пӗр-пек ӗҫсем тӑрӑх

16. Йӗтӗнпе кантӑра контрактацилессин ҫак постановленипе ҫирӗплетнӗ планӗсем ҫавӑнпа пӗрлех вӑл културӑсене хатӗрлессин планӗсем те пулса тӑмала тӑвас.

17. Республикӑсен Халӑх Комиссарӗсен Совечӗсене тата облӑҫ (край) ӗҫтӑвкомӗсене районсем валҫи йӗтӗн тата кантӑр памали тӗрлӗ (диференцилӗ) нормӑсем туса пама хушас, ӑна тунӑ чухне облӑҫ (край, республикӑ) валҫи ҫак постановленипе тунӑ вӑтам нормӑна улӑштарни пулмала мар.

Йӗтӗн тата кантӑр контрактацилес плана пӗр административлӑ район ӑшӗнче колхозсем патне ҫитернӗ чух йӗтӗнпе кантӑра контрактацилени тӑрӑх гектартан памали нормӑ виҫӗ тӗрлӗрен ытла мар пулма пултарать.

18. Ҫак постановленипе плана ытлашшипех тултарнӑшӑн пама пӑхнӑ преми-надбавкӑсене ҫакӑн пекех контрактаци договорӗнче кӑтартнинчен чылай лайӑхрах номӗрлӗ сӳс тата тылламан йӗтӗнпе кантӑршӑн та, планран иртерсе панӑ центнер-номӗрӗсене шута илсе, памала тӑвас. Кун пек чухне, панӑ продукцин пысӑк пахалӑхӗшӗн преми-надбавкӑ парассине плана хисеп тӗлӗшпе тултарнӑ пулсан кӑна туса иртермелле.

19. Машинӑ-тракторлӑ станцине кӗрекен колхозсене контрактаци договорӗнче кӑтартнӑ хисепрен тата пахалӑхран иртерсе контрактаци тӑрӑх тата МТС натурплати тӑрӑх (пӗрле илсен) панӑ пӗтӗм сӳсшӗн, тылламан йӗтӗнпе кантӑршӑн тата вӗсен вӑрлӑхӗшӗн преми-надбавкӑ тӳлеҫҫӗ.

20. Контрактаци тӑрӑх йӗтӗнпе кантӑр продукци парас плана ытлашшипех тултарнӑшӑн тӳлемели преми-надбавкӑна йӗтӗн йе кантӑр акса хӑварнӑ талкишрӑн, анчах контрактаци договорӗпе палӑртнинчен кайа мар талкишран, кашни колхоз тӑрӑх шутласа кӑлараҫҫӗ.

21. Планран иртерсе йӗтӗн тата кантӑр вӑрлӑхне панӑшӑн тӳлемели преми-надбавкӑна колхозсене вӗсем государствӑран илнӗ вӑрлӑх ссудине парса татсан тата вӗсем вӑрлӑх фончӗсене пӗтӗмӗшпех хывса хӑварнӑ пулсан кӑна параҫҫӗ, —вӑрлӑх ӗрчетекен колхозсем кунта кӗмеҫҫӗ, вӗсем пухса илнӗ йӗтӗнпе кантӑрӑн пӗтӗм вӑрлӑхне государствӑна параҫҫӗ. Колхозсем вӑрлӑх фондне хывнине райҫӗрӗҫ пайӗн представителӗ йертсе пыракан комиҫҫин йатарласа ҫырнӑ актипе ҫирӗплетсе пымала.

22. Йединоличник хуҫалӑхӗсене преми-надбавкӑсем колхозсене панин ҫурри чухлӗ параҫҫӗ.

23. Контрактаци договорӗ ҫине алӑ пуснӑ чухне колхозсене йӗтӗн тата кантӑр контрактацилени тӑрӑх контрактацилекен сӳс тата тылламан кантӑрпа йӗтӗн хакӗн, ҫавӑн пекех вӑрлӑх тума акнӑ ҫерте контрактациленекен вӑрлӑх хакӗн 20 проценчӗ чухлӗ аванс памала тӑвас.

24. Колхозсемпе колхозниксене контрактаципе МТС натурплати тӑрӑх панӑ йӗтӗнпе кантӑр вӑрлӑхӗн кашни центнерӗшӗн ҫу тата жмых памала тӑвас: 2 килограм курӑк ҫӑвӗ (растительное), 5-шер тенкӗпе тата 5 килограм жмых 7-шер пуспа.

25. Йӗтӗне тата кантӑра малтанлӑха ӗҫлесе хатӗрлекен заводсен колхозниксене, вӗсене колхозсем ӗҫкунӗсем ҫырса панисӗр пуҫне, тылламан кантӑрпа йӗтӗне завода турттарса пынӑшӑн, вӑл хушӑ 6-ран пуҫласа 15 ҫити километр пулсан, пӗр центнер-километршӑн 3-шер пус, тата 16-мӗш километртан пуҫласа малалла центнершӑн 5-шер пус тӳлемеле тӑвас.

26. ССР Союз Халӑх Комиссарӗсен Совечӗпе ПСК(б)П Тӗпкомӗ 1935 ҫулти мартӑн 20-мӗшӗнче „1935 ҫулта акнӑ йӗтӗнпе кантӑра контрактацилесси ҫинчен" йышӑннӑ постановленипе тата ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ 1936 ҫулта апрелӗн 29-мӗшӗнче „Кантӑр ӗрчетесси ҫинчен" йышӑннӑ 770-мӗш номӗрлӗ постановлени тӑрӑх йӗтӗнпе кантӑр ӗрчетнӗшӗн памала тунӑ лҫготӑсене 1938 ҫул валҫи вӑйрах хӑварас.

27. Пур облӑҫсем, крайсем тата республикӑсем тӑрӑх та колхозсене, колхозниксене тата йединоличник хуҫалӑхӗсене хӑйсен иртнӗ ҫулсенче, ку шута 1936 ҫула кӗртсе, кантӑра контрактациленипе пулнӑ парӑмӗсене тӳлессинчен хӑтарас. ССР Союзӗн Хатӗрлев Халӑх Комиссариатне колхозсемпе колхозниксем 1937 ҫулта акнӑ кантӑрӑн иртнӗ ҫулсенче пулнӑ парӑмсене витес шутпа панӑ пӗтӗм продукцине 1937 ҫулта акнӑ кантӑра контрактаци обйазателствисем тӑрӑх парассине пурнӑҫлас ӗҫре кӗртме хушас.

28. Колхозсене йӗтӗн тата кантӑр вӑрлӑхӗн ссуди тӑрӑх пулнӑ, 1938 ҫулта парса татмали парӑмсене тулес вӑхӑта виҫӗ ҫуллӑ срукилӑха тӑсса парас, 1938 ҫулта акнинчен—30 процент, йулашки 70 процентне пӗр пек пайсемпе—1939 ҫулта тата 1940 ҫулта акнӑ кантӑра парса тӳлесе татмала тӑвас.

* * *

ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗпе ПСК(б)П Тӗпкомӗ парти тата совет организацисене йӗтӗн тата кантӑр ӗрчетессине вӑйлатас ӗҫе болҫшевикла тытӑнма, кӑҫалхи ҫулах та ӗнтӗ йӗтӗнпе кантӑр тухӑҫлӑхне тата пахалӑхне татӑклӑнах хӑпартассине ӗҫре пурнӑҫлас майпа, колхозсем тытса тӑракан питӗ те пысӑк резервӑсене вӑйлӑ тухӑҫлӑх туса илес тата колхозсемпе колхозниксен тупӑшне ӳстерес ӗҫе мобилизацилеме хушаҫҫӗ.

ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн председателӗ **В. МОЛОТОВ.**

ПСК(б)П Тӗп Комитет секретарӗ **И. СТАЛИН.**

1938 ҫулти мартӑн 22-мӗш.

Партире тӑманнисене ответлӑ вырӑнсене ӗҫлеме лартаҫҫӗ

ССР Союзӗн Верховнӑй Советне суйлана вӑхӑтра партире тӑманнисем агитаторсем, доверенӑйсем, участкӑри суйлав комиҫҫин председателӗсем пулса ӗҫлесе хӑйсен пултарулӑхне кӑтартрӗҫ. Халӗ ҫак партире тӑман ҫынсенчен чылайӗшне ответлӑ вырӑнсене ӗҫлеме лартнӑ.

Куславкка районӗнче колхоз председателӗ пулса ӗҫленӗ Тимофейев йулташа райторг пуҫлӑхне лартнӑ. Колхоз председателӗн заместителӗ пулса ӗҫленӗ Смирнов йулташа райӗҫтӑвкомӑн собес пайӗн пуҫлӑхне лартнӑ. Ҫавӑн пекех Соловйов йулташа райӗҫтӑвкомӑн общчӑй отделӑн пуҫлӑхӗ туса хунӑ. Йалсовет секретарӗ пулса ӗҫленӗ Зайцев йулташа районри перекет кассин пуҫлӑхне лартнӑ. Гаврилов йулташа йалсовет председателӗнчен районри хатӗрлӗв комитет пуҫлӑхӗн помошникӗ туса хунӑ. Районри партире тӑманнисене тӗрлӗ государствӑ ӗҫӗсене 35 ҫын ӗҫлеме лартнӑ.

Куславкка комбинатӗнче те ҫавӑн пекех тӗрлӗ ответлӑ ӗҫсене 15 ҫын лартнӑ. Комбинатра рабочи пулса ӗҫленӗ Белов йулташа райплан председателӗ туса хунӑ.

С. П. Чамейов агитатора сочувствуйушчисен ретне илнӗ

Семен Павлович Чамейов—ӑшӑ кӑмӑлӑ, ӑслӑ, ҫамрӑк ҫын. Халҫхи вӑхӑтра Шӑмӑршӑ болҫницинче трахомработник тата агитатор пулса ӗҫлет. Вӑл йалти шкултан тата трахомработниксен курсӗнчен кӑна вӗренсе тухнӑ пулин те, хӑйӗн ӗҫне лайӑх пӗлет. Ӗҫре питӗ тӑрӑшать. Врачсем хушшине итлесе, вӗсем мӗн каланине вӑхӑтра та хӑвӑрт туса пырать. Болҫницӑна пынӑ ҫынсемпе йӗркелӗ калаҫать, лайӑх пӑхать. Кирлӗ пулӑшу пама йаланах хатӗр. Ҫавӑнпа ӑна районри халӑх та, болҫницӑра ӗҫлекенсем те питӗ йуратаҫҫӗ.

Ӑна болҫницӑра ӗҫлекенсен профсойузӗн вырӑнти комитет председательне суйланӑ. Кунта та ҫавӑн пекех тӑрӑшса, хастарлӑн ӗҫлет.

Вӑл тӑрӑшнипех болҫницӑра ӗҫлекен служӑщчисем хушшинче политикӑла агитаци ӗҫне йӗркелесе йанӑ.

Пӗлтӗр С. П. Чамейов йулташ агитаци ӗҫне хӑй тытӑнманччӗ. Пултараймастӑп пулӗ, сахал вӗренни капсӗрлет мана,—тесе хӑракаласа тӑратчӗ. Ҫавӑнпа йаланах районри учрежденисенче ӗҫлекен коммунистсем тата комсомолецсем патне пырса, болҫницӑра ӗҫлекенсем хушшинче политикӑла докладсем туса памашкӑн чӗнетчӗ.

ССР Союзӗн Верховнӑй Совет суйлавне хатӗрленнӗ май, агитаторсемпе ӗҫлесси уйрӑмӑнах вӑйланса кайрӗ. Октӑбӗр уйӑхӗнче Улатӑр хулинче агитаторсен вунӑкунлӑх курсӗ уҫӑлчӗ. Партин Шӑмӑршӑ райкомӗ С. П. Чамейов йулташа та ҫав курса вӗренме йачӗ. Вӑл унта аван вӗренсе тухрӗ те, Шӑмӑршӑ килсе хӑй агитатор пулса ӗҫлеме тытӑнчӗ. Часах ӗҫе хӑнӑхса ҫитрӗ. Политикӑла агитацине аван организацилерӗ. Ӑна доверенӑй пулма суйларӗҫ. Ҫак хисеплӗ те мухтавлӑ ӗҫе тӑрӑшса туса пычӗ.

— Улатӑрти вунӑкунлӑх курс мана питӗ пысӑк усӑ пачӗ. Епӗ унтан вӗренсе тухсан политикӑла агитаци ӗҫне питӗ йуратса, тӑрӑшса ӗҫлеме тытӑнтӑм. ССР Союзӗн Верховнӑй Совет суйлавне епӗр лайӑх иртерсе йатӑмӑр. Суйлав иртсен те епӗ хам ӗҫе, агитаци ӗҫне, пӑрахмарӑм. Болҫницӑра ӗҫлекенсем хушшинче йаланах политкӑла агитацилӗ ӗҫе туса пыратӑп. Ӗҫленӗ вӑхӑтра хамӑн политикӑла пӗлӳлӗхе ӳстеретӗп. Акӑ, нумайах пулмасть, ПСК(б) Партин Шӑмӑршӑ райкомӗ агитаторсен вунӑкунлӑх курсне туса иртерчӗ. Ҫав курсра епӗ те вӗрентӗм. Ҫапла ӗнтӗ пӗчӗккӗн-пӗчӗккӗнех вӗренсе ӳссе пыратӑп. Ҫитӗнӳсене курса хавасланатӑп. Тӑрӑшса, хӗпӗртесе ӗҫлетӗп. Хама шанса панӑ агитаци ӗҫне лайӑх организацилесе, партипе правителствӑ пирӗн умма кӑларса тӑратнӑ задачӑсене пурнӑҫлас тӗлӗшпе малашне те хастарлӑн ӗҫлесе пыратӑп. Халҫхи вӑхӑтра епӗ болҫницӑра ӗҫлекенсем хушшинче РСФСР тата Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗсен суйлав Положенийӗсене ӑнлантарса паратӑп. Ҫавӑнпа пӗрлех тӗнчери лару-тӑру ҫинчен, Совет Союзӗнчи ҫитӗнӳсем ҫинчен уйрӑм докладсем туса паратӑп, тет вӑл.

Халҫ унӑн тата пысӑк хаваслӑх пур. Парторганизаци ӑна сочувствуйушчисен ретне илнӗ. Вӑл, темиҫе ҫул хушши ӗнтӗ Ленин—Сталин партийӗ ретне кӗрсе, чунтан тӑрӑшса хастарлӑн та тимлӗн ӗҫлессишӗн шухӑшласа ҫурӑннӑ. Халҫ вӑл сочувствуйушчи. Парти ретне кӗме пӗтӗм вӑйа хурса хатӗрленет. Унӑн сӑмахпа каласа та, хут ҫине ҫырса та пама май ҫук пысӑк савӑнӑҫ.

Н. Косойкин.

Йӑнӑшсене тӳрлететпӗр

Тракри вӑтам шкулта пӗлтӗр комсомол йышне ӳстерессишӗн тӑрӑшман. Комсомолӑн шкулти пуҫламӗш организацийӗ начар ӗҫленӗ. Лайӑх ӗҫлекен комсомолецсене Федотова, Йефремова, Павлова, Игнатйева пӗр айӑпсӑрах комсомолтан кӑларнӑччӗ. Халӗ ПСК(б)П Тӗпкомӗн йанварти пленум решенийӗсене тӗплӗн вӗренсе пынӑ май хамӑр тунӑ йӑнӑшсене лайӑх ӑнланса илтӗмӗр. Федотовпа Йефремов, Павлов йулташсене комсомол ретне илтӗмӗр.

А. Семенов.

Ҫӗнӗ учебниксемпе вӗренеҫҫӗ

Кӑташри (Йетӗрне р.) „Пионер" колхоз ҫумӗнчи пуҫламӗш организацийӗнчи комсомолецсем политкружоксенче Октӑбӗр революци 20 ҫул тултарас умӗн тухнӑ—„Наша родина", „СССР и капиталистические страны" йатлӑ кӗнекесем тӑрӑх вӗренме тытӑнчӗҫ.

Комсомолецсен вӗренес хаваслӑх пысӑк.

М. Чечек.

Ҫӗнӗ пуҫламӗш организаци

Росснабсбытӑн Чӑваш уйрӑмӗнче ку таранчен комсомол организаци пулман. Кӑҫал, парторг Стешов йулташ пулӑшнипе, ҫамрӑксем комсомол ретне кӗрсе пуҫламӗш комсомол организаци организацилерӗҫ. Халӗ организацинче 6 член, кӗрес текенсем татах та пур.

Г. Йаковлев.

Библиотекӑ примерлӑ ӗҫлемеле

ТРАК. Парткабинет библиотеки начар ӗҫлени ҫинчен йаланах калаҫаҫҫӗ. Анчах парти райкомӗ ун ҫине ҫаврӑнса пӑхмасть, ӗҫе лайӑхлатса йарас тӗлӗшпе нимӗн те туман.

Библиотекӑра ӗҫлекен Алмазова Александра час-часах заҥатине вӑхӑтра пымасть. Ирхине 9 сехетре пырас вырӑнне, 11 сехетре пынисем те, кунӗпех заҥатине пымасӑр йулнӑ вӑхӑтсем те пур.

Алмазова политикӑла ыйтусене те начар ӑнланать, библиотекӑ ӗҫне те сахал пӗлет.

Парткабинет библиотеки ӗҫне тивӗҫлипе йӗркелемеле.

З-ва.
Д-ва.

Кинопередвижкӑсемпе вӗсен картинисем ҫинчен

Лайӑх та ӑнланма ҫӑмӑл кинокартинӑна колхозра йӗркелӗ кӑтартса пани колхозниксемпе колхозницӑсене културӑлӑ канма пулӑшать. Канма кӑна мар, кинокартинӑ урлӑ пӗр-пӗр событие, клас кӗрешӗвӗн пӗр-пӗр тапхӑрне тивӗҫлипе ӑнланма нумай ҫӑмӑллатать. Анчах ҫак пархатарлӑ тӗслӗхе Шупашкар районӗнчи кинопередвижкӑсен базинче ӗҫлекенсем пӗртте ӑнланасшӑн мар иккен. Пӗлместпӗр, тен, Шемшер йалсоветӗнчи колхозниксемпе колхозницӑсемшӗн кӑна ӑнланасшӑн мар пулӗ вӗсем. Шемшерте халӗ нумайӗшӗсем кино ҫинчен ҫӑмах хускатсанах:

— Ес҅ „Первый и последний" йатлӑ кинокартинӑна курнӑ-и?—тесе ыйтаҫҫӗ пӗр-пӗринчен, ыйтаҫҫӗ те кулаҫҫӗ. Паллах, картининчен кулмаҫҫӗ, картинӑра мӗн ҫинчен каланине пурте пекех манма. Манмалӑх вӑхӑчӗ те пур. Мӗншӗн тесен ҫав картинӑна кӗркуннех илсе килсе кӑтартнӑччӗ, унтанпа пӗр картинӑ та кӑтартман. Ҫавӑнпа вӑл Шемшере кинокартинӑна илсе килсе кӑтартасси пуҫламӗшӗпе йулашки пулса тӑчӗ.

Мӗскершӗн вӑл ҫавӑн пек? Сӑлтавсене тупма йӑвӑр-ха халӗ, анчах кӳршӗри йалсоветсене те ҫавнашкалах кино пырса кӑтартманни ҫинчен калама пултаратпӑр. Апла пулсан, кинопередвижкӑсен базинчи ҫынсем базӑран тухаҫҫӗ-ши?

Ҫӑпах та, виҫӗмҫул Шемшерте „Чапайев" тата пӗлтӗр ҫуркунне „Мы из Кронштадта" (сасӑсӑррисем) фильмсем илсе килсе кӑтартрӗҫ. Ахалҫтен мар „Чапайев" картинӑна икӗ кас кӑтартсан та кӳрма пынӑ халӑх нумай пулнӑ. Анчах Шемшер йалсоветӗнчи колхозниксем пурте пекех халӗ ҫавнашкал паха картинӑсене—калаҫакан кинокартинӑсене курман-ха. Хуласенчӗ тата чылай колхозсенче те калаҫакан кинокартинӑсем куллен пурнӑҫ йӑлине кӗрсе пыраҫҫӗ пулсан, шемшерсемшӗн халӗ вӑл „тӗлӗнсе каймала" йапала ҫеҫ пулса тӑрать-ха.

Акӑ халӗ Шупашкарта та, ытти хуласенче те, тата хӑшпӗр колхозсенче нумайах пулмасть кӑларнӑ „Ленин в Октябре" йатлӑ калаҫакан филҫм курчӗҫ. Вӑл мӗнтери паха, хаклӑ картинӑ иккенне епӗ хаҫатсенче вуласа ҫеҫ пӗлетпӗр. Шемшерсем те, ыттисем пекех, тӗнчери ӗҫхалӑхӗн хӑйулӑ та аслӑ, чунтан йуратакан ҫулпуҫ В. И. Ленин сӑнне курасшӑн, вӑл калаҫнине итлесшӗн. Кинокартинӑра В. И. Ленин хӑй ҫуккине, унӑн ролҫне ССР Союзӗн халӑх артисӗ Шчукин выҫланине те пӗлеҫҫӗ, ҫавах та унӑн урлӑ В. И. Ленина, унӑн хӑйулӑ та ҫивӗч сӑмаххисене итлесе курасшӑн. Анчах ҫук. Ун пек картинӑ хӑҫан килессине те калама йӑвӑр, мӗншӗн тесен илсе килес тӗлӗшпе тӑрӑшакан ҫук.

К. Н.

Кантӑр тупӑш нумай парать

Мордва хресченӗсем тахҫантанпах кантӑр акса тӑваҫҫӗ. Революцичен, халӗ Мордва республикине кӗрекен йалсенче 25 пин гектара ҫитиччен кантӑр акнӑ. Анчах та, ун чухне кантӑр халӗ колхозсенче паракан тупӑш чухлӗ пама пултарайман Кантӑр тухӑҫлӑхӗ начар пулнӑ. Мӗншӗн тесен, ун чухне агротехникӑ кайра тӑнӑ, кантӑр акса тумали йӗркесем ҫинчен, суртлӑ вӑрлӑхсем ҫинчен хресченсем пӗлмен.

Совет влаҫӗ чухне ҫеҫ, колхоз стройӗ ҫӗнтернӗ условире ҫеҫ кантӑр акса тӑвасси анлӑн саралма пултарнӑ. Халӗ Мордва республикинче кантӑр тӗп вырӑнта тӑракан тата тупӑш паракан кулҫтурӑ вырӑнне йышӑннӑ. Мордва АССР Ҫӗрӗҫ халӑх комиссарӗ, ССР Союзӗн Верховнӑй Совечӗн депутачӗ Кулаков йулташ калашле, кантӑр Узбекистанри ҫӗр мамӑкӗ. Кантӑр колхозниксем ӗҫкунӗ тӑрӑх тивекен укҫа шутне чылай ӳстерет. Республикӑри колхозниксен уйрӑм семйисем ӗҫкунӗсем тӑрӑх темиҫешер пин тенкӗ укҫан илнӗ. „Путь к социализму" колхозра (Инсарский районӗ) пӗр мӗлйун тенкӗ ытларах тупӑш илнӗ, ҫак тупӑшра кантӑр паллӑ вырӑнта тӑрать. Кочкуровский районӗнчи „Мировой пролетариат" колхозра кантӑр сӳсӗ сутса 58 пин тенкӗ ытла тупӑш илнӗ. Кунсӑр пуҫне сутмали продукци тата 9 пин тенкӗлӗх пур.

1937 ҫулта республикӑра 30350 гектар акнӑ. Кӑҫал кантӑр акассине 42,2 пин гектара ҫитереҫҫӗ. Республикӑра пур районсенче те кантӑр акаҫҫӗ. Уйрӑмах кантӑр акас ӗҫ Писаровский, Чамсинский, Йнсарский, Кадошкинский районсенче анлӑн сарӑлнӑ. Ҫав районсенче кашнинчех 3-шер пин гектар кантӑр акаҫҫӗ. Инсарский районӗнче „Красная Мордовия", „Путь к социализму" колхозсем 1937 ҫулта 200–250 гектар ҫинче кантӑр акса тунӑ.

Мордва республикинче суртлӑ кантӑр акаҫҫӗ. Кӑҫал акма палӑртнӑ 42,2 пин гектартан 21 гектар ҫине суртлӑ вӑрлӑх—кӑнтӑр йенче акса тӑвакан кантӑр акаҫҫӗ. Ҫак шутран 8,3 пин гектарӗ крйажовой, 10 пин гектара йахӑн трубачевской текен кантӑр. Кӑнтӑр йенче акса тӑвакан кантӑр Мордва республики условинче вӑрлӑх памасть, ӑна сӳсшӗн ҫеҫ акаҫҫӗ. Ҫавӑнпа та акма кирлӗ вӑрлӑха урӑх республикӑсенчен кӳрсе килеҫҫӗ. Йулашки ҫулсенче колхозниксем тата кантӑр акса тӑвакан специалиссем кӑнтӑрта акса тӑвакан кантӑр вӑрлӑхне тӑвасшӑн ҫине тӑрса ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсем ку тӗлӗшпе чылай пысӑк ӗҫсем тунӑ. Кӑнтӑрта акса тӑвакан кантӑра пиҫсе ҫитсе вӑрлӑх паракан сурт тунӑ. Кӑҫал ҫак суртлӑ вӑрлӑха 430 гектар ҫине акаҫҫӗ.

Кӑҫалхи ҫуракинчен пуҫласа Мордва республикинче пусипе кантӑрӗ пӗр вӑхӑтрах пиҫекен кантӑр вӑрлӑхӗ паракан никӗс тӑваҫҫӗ. Вӑл 450 гектар ҫинче пулать. Унта Колацкинский районӗнчи 14 колхоз ӗҫлет. Вӑрлӑха ыттисемпе хутӑштарса йарас мар тесе 6 километр таран уйӑрса тӑраҫҫӗ.

Пусипе кантӑр пӗр вӑхӑтра пиҫсе ҫитменни кантӑра пуҫтарса кӗрес ӗҫе механизацилеме чӑрмантарнӑ. Халӗ ӗнтӗ пусипе кантӑр пӗр вӑхӑтра пиҫсе ҫитекен тунӑ май, механизаци ӗҫӗ хӑвӑртӑн малалла кайать.

1937 ҫулта кантӑр пуҫтарса кӗртнӗ вӑхӑтра Мордва республикинче кантӑр саракан машинӑсем 20 ӗҫленӗ. Кӑҫал вӗсем тата нумайрах пулаҫҫӗ. Кантӑрсене малтанхи хут тирпейлессине сӳс-кантӑр завочӗсенче тӑваҫҫӗ, унашкал заводсем республикӑра 8 пур.

Кӑнтӑрта акса тӑвакан кантӑр вӑрлӑхне республикӑна малтанхи хут 1937 ҫулта кӳрсе килнӗ. Ҫак кантӑрӑн тухӑҫлӑхӗ пысӑк. Иртнӗ ҫулта ҫак кантӑр кашни гектартан 6,5 центнер сӳс панӑ.

Уйрӑм районсем татах пысӑкрах ҫитӗнӳсем тунӑ. Ҫапла, Инсарский районӗнче гектартан 8,4 центнер кантӑр сӳсӗ туса илнӗ.

Кӑнтӑрти кантӑра вӑйлӑ туса илнӗ колхозсенчен „Красная Мордовия", „Великий перелом", „Путь к социализму" колхозсене уйрӑмах палӑртмала. Вӗсем 200—300 гектар ҫинчен кантӑр сӳсӗ 8 йе 8,5 центнершер туса илнӗ. Карл Маркс, Киров йачӗпе тӑракан колхозсем уйрӑм участкӑсем ҫинче 18-шар центнер сӳс-кантӑр туса илнӗ.

Чылай колхозсенче стахановла звеносем питӗ вӑйлӑ кантӑр туса илнӗ. Кочкуровский районӗнчи „Мировой пролетариат" колхозри чапа тухнӑ кантӑр маҫтӑрӗн Байгушкин йулташӑн звени 5 гектар ҫине акнӑ кӑнтӑрти кантӑртан 24,6 центнер сӳс туса илнӗ. Лайӑх звеноводсен: Печказова, Панушкина, Артамонов, Игнатйев, Тумайкин йулташсен йачӗсем пӗтӗм республикипе чапа тухнӑ. Вӗсем 5–10 гектар ҫинчен 16—18 центнершер сӳс туса илнӗ.

Мордва республикинче 1937 ҫулта кантӑр акса тӑвас ӗҫре пулнӑ ҫитӗнӳсене партипе правителствӑ Мордва колхозӗсемщӗн тӑрӑшнипе, колхозниксем, уйрӑмах стахановецсем ҫине тӑрса ӗҫленипе тунӑ.

Кантӑр акса тӑвас ӗҫре малта пыракан Бечказова, Панҫушкина, Артамонов, Байкушкин т. ыт те вӑйлӑ кантӑр туса илессишӗн болҫшевикла кӗрешнӗ, вӗсем агротехникӑна ҫине тӑрса ӗҫе кӗртсе пынӑ. Вӗсем кантӑра кӗрхи ҫӗртме тунӑ лайӑх ҫӗр ҫине акнӑ, ҫӗре тислӗк тата минераллӑ удобренисем тӑкса ҫемҫетнӗ. Кантӑр ӳснӗ вӑхӑтра ҫумкурӑксене тата кантӑра сийен тӑвакан хурт-кӑпшанкӑсене пӗтернӗ. Кантӑр ӳснӗ вӑхӑтра апат панӑ. Печказова йулташ кантӑра шӑварнӑ. Пусине тата кантӑрне вӑхӑтра татса илсе вӑхӑтра шыва хутнӑ, кантӑра государствӑна парассине лайӑх организациленӗ.

Мордва республикинчи йалхуҫалӑх ӗҫӗнчи малта паракансен съезчӗ умӗн, ССР Союзӗн Верховнӑй Совечӗн депутачӗ Печказова йулташ йертсе пыракан звено республикӑри колхозсенчи кантӑр акса тӑвакан звеносене гектартан 22 центнер кантӑр сӳсӗ туса илме ӑмӑртува тухма чӗннӗ.

Гектартан 22 центнер сӳс-кантӑр туса илессишӗн пыракан ӑмӑртува Кочнева, (Аташевский районӗнчи „Красный луч" колхозран) хутшӑннӑ. Кантӑр акса тӑвас ӗҫӗн маҫтӑрӗ Артамонов йулташ Печказова йулташ чӗннине ответлесе, хӑйӗн звенипе гектартан 25 центнер сӳс-кантӑр, Байгушкин йулташ 30 центнер туса илме пулнӑ.

Печказова йулташ гектартан мӗнле майпа 22 центнер сӳс-кантӑр туса илме шутлать? Чи малтан кантӑр акакан вырӑна йур шывне тытса йулаҫҫӗ. Кантӑр акмали вырӑна тислӗк тата минераллӑ удобренисем тӑкаҫҫӗ. Кали тӑварӗ, монтан-селитрӑна ҫӗр йӗпе чухне сапаҫҫӗ, кун хыҫҫӑн, лайӑх ҫӗрнӗ тислӗк тӑкаҫҫӗ те сухалаҫҫӗ. Сӳрелес умӗн суперфосфат сапаҫҫӗ. Кантӑра хӗреслӗ акаҫҫӗ. Пӗрремӗш тата иккӗмӗш хут апат пана хыҫҫӑн, ҫавӑн пекех монтан-селитра сапаҫҫӗ.

Йалхуҫалӑхне сийен тӑвакансемпе кӗрешме емел тата кантӑр пӑрҫине тытмалисем тунӑ. Шӑнтас мӗн пулсан участкӑ тавра типӗ тислӗк купалаҫҫӗ те ӑна ҫунтараҫҫӗ. Звено кантӑра пӑхса ӳстерме, пуҫтарса кӗртме, тирпейлеме конкретлӑ план тунӑ.

Мордва республикипе танаштарсан, кантӑр тӑвас тӗлӗшпе пирӗн республикӑ кайа йулнӑ. Пирӗн колхозсем кантӑр вӑйлӑ тума вӗренсе ҫитмен. Мордва республикинчи колхозсен опытне хамӑр республикӑри колхозсене сармала.

В

Хĕрарăмсен хастарлăхĕ ӳсет

ТУРХАН. Липовкăри Ленин йачĕпе тăракан промысла ертелĕн правленийĕ Пĕтĕм Тĕнчери хĕрарăмсен Коммунисла кунне иртернĕ май производствăра лайăх ĕçлекен хĕрарăмсене парнесем пачĕ. Кусем хушшинче станочницăсем, маçтăрсем, подручнăйсем т. ыт. те. Вĕсем нихăшĕ те хăйсен профеççийĕпе йатарласа шкулсенче вĕренмен, хăйсен ертелĕнче организацилене тĕрлĕрен кружоксенче вĕренсе тухнă. Пĕр икĕ çул кайараххипе танлаштарсан, вĕсем чылай ӳсрĕç. Акă, сăмахран М. Воробйова йулташа илер. Вăл малтанах станок çинче ĕçленĕ. Кайарахпа, техникăна алла çавăрса илсен, нормăна йаланах 150 процент тултарса ĕçleме тытăнчĕ. Станокпа ĕçленĕ хушăрах тата пĕтĕм ĕçĕн процесне вĕренсе пынă.

Кăçал Воробйова йулташăн ĕçне хакласа правлени ăна сменă маçтăрне куçарчĕ. Ку ĕçре те вăл хăйĕн пултарулăхне часах кăтартрĕ. Унăн смени халĕ малта пырат.

Нумай çул хушши пĕчĕкрех ĕçсенче ĕçленĕ А. Мунтайкина йулташа кочегара куçарчĕç. Калас пулат, Мунтайкина йулташ хăйĕн ĕçне йуратса ĕçлесе, паха примерсем кăтартат.

Çаксем пекех А. Шемекейева, В. Степанова, М. Дӳкина, М. Андейева станочницăсем те йаланах нормăсене 120—200 процент таран тултарса ĕçлеççĕ.

А. Архипов.

Ăмăртса ĕçлеме пуçласан

Йелчĕкри крахмал заводĕнчи цехсемпе бригадăсем пурте март уйăхĕнче социалисăмла ăмăртăва тухрĕç. Çакăн хыççăн кашни бригада квартал планне срукчен тултарассишĕн кĕрешме тытăнчĕ.

Крахмал тăвакан Молдов бригадипе Костылин йулташ бригади кашни кунхи плана 110 процентран кайа мар тултарма, прогул, простой тăвассине пĕтерме пулчĕç. Çавăн пекех тата хута сахал пĕлекенсене вĕрентессине, техникăна вĕренеессине, рабочисем хушшинче кулђтмассăлă ĕçе вайлатассипе те обйазателствăсем илчĕç.

Халĕ çак обйазателствăсене пурнăçласа пыраççĕ. Молдов йулташ бригади кашни кунах плана 150—200 процент таран тултарат, акă мартăн малтанхи пилĕк кунлăхĕнче крахмал тăвассине 200 процент тултарчĕ.

Костылин бригади те унтан йулмаст. Вăл та кулленхи плана 195 процент таран тултарса ĕçлет. Вĕсем туса кăларакан тавар пахалăхĕ лайăх, брак çук.

Комсомол организацийĕ пуçарнипе заводри рабочисем хушшинче политкружок организацилерĕç. Кружока Майков комсомолец йертсе пырат.

И. Антонов.

Мартăн 15-мĕшĕнче паттăр пољар тĕпчевçисем: ПАПАНИН, КРЕНКЕЛ, ШИРШОВ тата ФЕДОРОВ йулташсем Ленинграда çитрĕç.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: папанинцăсем „ЙЕРМАК" пароход çинчен анаççĕ. Совет Сойузĕн Геройĕ И. Д. ПАПАНИН кĕтсе илекенсене саламлат.

А. Агич фото ӳкерчĕкĕ (Сойузфото).

Пољуса парăнтаракансене хĕрӳлĕ салам!

Папанин, Кренкел, Ширшов тата Федоров йулташсене—совет халăхĕн пархатарлă ывăлĕсене хĕрӳлĕ салам! Социалисăмлă хăватлă çĕршывăн хĕрлĕ йалавĕ айĕнче есĕр Çурçĕр пољусне парăнтартăр, çурçĕрти Пăрлă океанăн халиччен никам пырса тĕпчемен анлăшĕсен вăрттăнлăхне тупса палăртрăр.

Совет Сойуз Геройĕсен çемйине çĕнĕ çынсем хутшăнни çинчен, Совет Сойуз Геройне—Папанина иккĕмĕш хут Ленин орденĕ парса наградăлани çинчен епĕр пысăк савăнăçпа пĕлтĕмĕр. Ленинăн Сталинăн мухтавлă партийĕ йертсе пыракан совет халăхĕ кăна çакăн пек çынсене вĕрентсе ӳстерме пултарнă.

Чыс та мухтав куçса çӳрекен „Çурçĕр пољусĕ" станци патне пăрсем тата штормсем витĕр пынă „Таймырăн", „Мурманцăн", „Йермакăн" хăйулă морйакĕсене!

Хаклă йулташсем!

Малашнехи ĕçре паха тăван çĕршыва ырлăх тăвассишĕн, аслă Сталин мухтавĕшĕн çитĕпӳсем тума сунатпăр сире!

Совет Сойуз Геройĕсем:

М. ВОДОПЙАНОВ, В. МОЛОКОВ, М. ГРОМОВ, И. СПИРИН, М. СЛЕПНЕВ.

Халăх йуррисем

СТАЛИН ÇИНЧЕН ХУНА ЙУРА

1

Мухтавлă çĕршывăн сарлакăшĕ тăрăх,
Хĕвеллĕ сăртсен тӳпине çитиччен,
Йурлат йурă халăх тăван та йуратнă
Çулпуçăмăр Сталин аттемĕр çинчен.

2

Вĕçет çакă йурă шух кайăкран шухă,
Асаплăх тĕнчийĕ хайарран чĕтрет:
Нимле чикĕсем те ăна хаљ чараймĕç,
Никам та чараймĕ çав шухă йурра.

3

Нухайккă та, хĕç те ăна хăратаймĕç,—
Мĕн пур баррикадăсенче йанăрат.
Йурлат вăл йурра хаљ рикши те, кули те,
Йурлаç ăна паттăр киттай салтаксем.

4

Çулпуçăмăр Сталин çинчен йурласа ак
Утаççĕ пĕр харăс ĕçхалăх çарсем.
Çунат, йăлкăшатçке хайар вутлă-çулăм,—
Çĕкленчĕ тĕнче йулашки к(ĕ)решĕве.

5

Епир вăл йурра хаљ йурлатпăр мăнаçлăн,
Мухтатпăр çулпуçăн çап-çут ĕмĕрне.
Илемлĕ, телейлĕ кунçулшăн йурлатпăр,
Йурлатпăр ыр пурнăç мухтавĕ çинчен.

6

Мухтавлă çĕршывăн сарлакăшĕ тăрăх,
Хĕвеллĕ сăртсен тӳпине çитиччен,
Йурлат йурă халăх тăван та йуратнă
Çулпуçăмăр Сталин аттемĕр çинчен.

М. Иңушкин.

Устава пăсса ĕçлеме йурамаст

Вăрман хĕрринчи „Хĕрлĕ Сормово" (Тăвай р.) колхоз правленийĕнче ĕçлекенсем йалхуçалăх ертелĕн уставне пăсса ĕçлеççĕ.

Йалхуçалăх ертелĕн сталинла уставĕ çинче: „Бригадир кашни ернере пĕререн кайа мар ертел членне вăл тупă ĕçĕсене шутласа парат, йышăннă ĕç хакĕсем тăрăх вăл миçе ĕçкунĕ тунине колхозникĕн ĕç кĕнеки çине çырса парат.

Ертел правленийĕ кашни уйăхра ертел членĕсем иртнĕ уйăхра мĕн чухлĕ ĕçкунĕ тунине кăтартакан спискă кăларса çакат",—тенĕ.

Анчах та çак пункта хăшпĕр бригадирсем те, правлени те пăсса ĕçлеççĕ. Бригадирсем йанвар уйăхĕнче ĕçленĕ ĕçкунĕсене ĕç кĕнекисем çине çырса паман. Правлени те колхозниксем мĕн чухлĕ ĕçленине кăтартакан спискă кăларса çакман. Колхозниксем ку таринччен те хăйсем мĕн чухлĕ ĕçкунĕ тунине пĕлмеççĕ.

„Правлени ревизи комиççийĕ пăхса тухнă çулталăкри отчотне тата правленин чи кирлĕрех йалхуçалăх кампанисене мĕнле туса иртерни çинчен калакан отчотсене çирĕплетет.

Уставăн çак пунктинче кăтартнă ыйтусем тăрăх ертел правленийĕ йышăннисем пĕтĕм членсен пухувĕ çирĕплетмесĕр вăйа кĕмеççĕ",—тенĕ уставра.

Колхоз правленийĕ çак пунктсене те пăсса ĕçлет. Колхозăн ватă лашасем пулнă пирки, правлени колхозниксемпе килĕшмесĕрех 3 лашине сутса йанă та чылай вăхăт иртсен тин колхозниксемпе килĕшнĕ. Кăçал пурĕ 7 лаша сутнă. Райçĕрĕç пайĕ 7 лаша вырăнне лашасем йе тыхасем илме хушнă пулсан, пайанхи куна пĕр ĕç лаши те илмен. Çавăн пекех колхозăн çулталăкри отчотне те хĕрарăмсен пухувĕнче çеç ăнлантарса панă.

Ертелĕн укçа-тенкĕ расхутне кăтартакан мĕн пур документсем çине, счетоводсăр пуçне, ертел председателĕ йе унăн заместителĕ алă пусмала.

Анчах кунта капла тумаççĕ. Укçа-тенкĕ расхутланă документсем çине председател йе завхоз анчах алă пусса çирĕплетеççĕ.

Çавăн пекех устав çинче „ревизи комиççийĕ çулталăк хушшинче 4 хут ревизи тăват", тенĕ. Ревизи пирĕн колхозра 2 йе пĕрре çеç пулса пырат.

Йалхуçалăх ертелĕн сталинла уставĕ вăл çирĕп пулмала, ăна пăсса ĕçлеме никама та ирĕк паман.

В. Илйин.

Чăх-чĕп фермисен чĕпсене ӳстерме хатĕрленмеле

Чĕпсене пăхса ӳстересси—чăх-чĕп шутне нумайлатса пырас ĕçре татăклă вырăнта тăрат. Иртнĕ çулсенче колхозсен чăх-чĕп фермисем чылайĕшĕ чĕпсене пăхса ӳстерме тивĕçлипе хатĕрленменчĕ. Чĕпсене валљи кирлĕ çимĕçсем çителĕклĕ хатĕрлеменни тата чĕпсене тăвăр çуртсенчех усранисем пулнă. Ку вăл чĕпсен шутне чакарма пултарат. Иртнĕ çулсенче пулнă йанăшсене кăçал тăвас мар тесе, чĕпсене пăхса ӳстерме тĕплĕн хатĕрленсе пымала.

Чĕпсене усрамали пĕтĕм çуртсене чĕпсем тухас умĕн пĕр уйăх малтан инкубаци станцин техникĕ, районри техник-строител, колхоз председателĕ тата чăх-чĕп фермин заведуйушчийĕ пĕрле пăхса тухмала. Вĕсен çурчĕсен виттисене, вентиљацисене, чĕпсем лармали вырăнсене мĕнле тунине сăнаса тухас пулат. Чĕпсем валљи тунă çурта йусамала пулсан, ăна пĕтĕмпех тасатмала, тĕплĕн дезинфекци тумала. Дезинфекцине районри выљăх тухтăрĕ вĕрентнĕ тăрăх, йе унăн кăтартăвĕ тăрăх тума кирлĕ. Хăшпĕр чăх-чĕп фермисенче çуллахи вăхăтра чĕпсене усранă çуртра хĕлле чăхсене усранисем те пулаççĕ. Ун пек чухне чĕпсем тухиччен пĕр уйăх малтан, чăхсене урăх çурта куçарас пулат.

Колхозсен чăх-чĕп фермисенче чĕпсене çатма çинчен шăварнисем чылай тĕл пулкалаççĕ. Вара чĕпсем шыв çине пылчăк илсе кĕреççĕ, йĕпенсе тухнипе шăнаççĕ. Çавăн пирки чĕпсем вилнисем те пулаççĕ. Вăл çитменлĕхсем малашне ан пулччăр тесе, чăх-чĕп фермисен инкубаторла станцисем урлă шăвармалисем тума кӳршек завочĕсене заказ памала.

Çамрăк чĕпсене ăнаçлă ӳстерсе пырас тесен, пĕчĕккисене валљи уйрăм, пысăккисене валљи уйрăм кормушкăсем кирлĕ.

300 чĕп ӳстерме пĕр брудер кирлĕ. Чăх-чĕп фермилĕ колхозсен пурин те кирлĕ чухлĕ брудерсем туйанмала.

Чĕпсене лармали вырăнсене (сарлакăшĕ 8 сантиметртан кайа мар пулмала) вăхăтра туса хатĕрлемеле, вара икĕ йе виçĕ ернене çитнĕ чĕпĕсем хăйсемех унта ларма тытăнаççĕ. Йатарласа тунă вырăна вăхăтра лартма вĕрентсен чĕпсем сапаланса çӳрени пулмаст.

Йур кайма тата çĕр ăшăнма пуçласанах, чăх-чĕпсем валљи уйăрнă вырăна йĕркене кĕртмеле. Ку вырăна малтанах йуртан тасатса хумала, вара час типсе çитет те, чĕпсене иртерех вăл вырăна илсе тухма май пулат. Ун пек вырăна сухаласа, сĕлĕ тата урпа иртерех акса хăвармала. Унта сулхăн пулма йăвăçсем, ӳсен-тăрансем—хĕвелçаврăнăш тата ыттисене те акмала. Чĕпсене валљи уйăрнă вырăн тавра карта тытмала.

Чĕпсем лайăх ӳсесси вĕсене мĕн çитерсе пурăннинчен те килет. Колхоз правленисемпе фермă пуçлăхĕсен чĕпсене валљи тулă, сĕлĕ тата урпа кĕрписем хатĕрлемеле. Хăймине уйăрнă сĕте турăх йевĕрлĕ туса чĕпсене çитерсен пит усăлă пулат.

Брудерсене ăшăтма вутăпа тата турпассемпе усă курма йурамаст, ун пек температурăна пĕр пек тытма çук. Чĕпсем тухиччен малтанах брудерсене ăшăтма çĕр кăмрăкĕ кӳрсе хатĕрлемеле. Малтан брудергауз патне типĕ улăм сарса хумала, чĕпсем тухнăранпа пĕр ерне çитиччен пăчкă турпасĕ сарса пама йурамаст.

Çитĕнсе çитнĕ чăх-чĕпсене йĕркелĕ пăхмала, нормă тăрăх тăрантарса усрамала. Уйрăмах инкубаци вăхăтĕнче çавăн пек пăхса усрани усăлă. Вара чĕпсене лайăх пăхса ӳстерме пулат. Чăх-чĕпсене пĕрчĕлĕ тырăсемпе, рак хуранĕнчен авăртса тунă çăнăхпа, аш-какай йулашкисемпе тăрантарса усрамала.

Иртнĕ çулта чăх-чĕп ĕрчетес ĕçре пысăк çитменлĕхсем пулнă. Кăçал тухакан чĕпсене пурне те йĕркелĕ пăхса ӳстерме тăрăшмала. Епĕр ăна тума пултаратпăр. Санитари тата зоотехникă ĕçĕсене пĕтĕмпех пăхăнса тата тăрăшса ĕçлени çеç кирлĕ.

Чăх-чĕп йĕнĕпе ĕçлекен зоотехник И. Љвова.

РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенисене вĕренеççĕ

Чăкăр йалсовечĕ (Шупашкар р.) РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенисем пичетленсе тухсан йалсенче суйлав Положенине вĕренме 6 кружок организациленĕ. Вăл кружоксене йертсе пыма агитаторсем çирĕплетсе тухнă. Халĕ кружоксенче заңатисем йĕркелĕн пулса иртеççĕ. „Трудовик" колхозри В. Йаковлев агитатор РСФСР Конституцине вĕрентессипе 3 заңати, РСФСР Верховнăй Советне суйламали Положенине вĕрентессипе 2 заңати туса ирттерчĕ. Заңатисем 5 кунта пĕрре пулса пыраççĕ. Çитес кунсенче Чăваш АССР Конституципе Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали Положенине вĕренме тытăнаççĕ.

Й. Василйев.

Çĕнйал Йавăшри (Вăрнар р.) „Çĕн йал" колхозра суйлав Положенине вĕренмели кружоксене уйхир бригадирĕсем йертсе пыраççĕ. Т. Федоров бригадир хăйĕн бригадинчи колхозниксене пухса 3 заңати туса иртерчĕ.

— РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйламала пуличчен бригадăри колхозниксене пурне те суйлав саккунне лайăх вĕрентсе çитерме пулатăп, ку тĕлĕшпе те епĕ колхозри кулленхи ĕçсене тĕплĕн туса пынă пекех тăрăшса ĕçлетĕп,—тет Федоров йулташ. Суйлав Положенине Терентйев йулташ бригадинче те аван вĕренеççĕ. Бригадăри колхозниксем кружок заңатиесене пурте çӳреççĕ.

А. Пољаков.

Мартынкассинче (Трак р.) суйлав саккунне вĕрентес тĕлĕшпе кашни вунă кил пуçне икĕ агитатор ĕçлет. Агитаторсем суйлав саккунне схемăсемпе тата РСФСР, Чăваш АССР карттисем тăрăх вĕрентеççĕ. Сойузлă республикăсемпе автономлă облăçсен суйлавĕсене хатĕрленес ĕç мĕнле пыни çинчен колхозри стена хаçатĕнче кулленех çутатса пыраççĕ.

И. Сергейев.

Вăрман Йенĕшри (Шăхасан р.) „Свобода" колхозра Фил. Петров учител тăрăшнипе 23 çынран суйлав саккунĕпе Чăваш АССР Конституцине вĕренмели кружок организацилерĕç. Заңати виçĕ кунра пĕрре пулса пырат. Кружокра вĕренекенсем суйлав саккунне вĕренме çӳреймен çынсем патне килсем тăрăх çӳресе ăнлантараççĕ.

И. Смирнов.

Н. Илпек
(красноармеец)

Чикĕре.

Штаб приказне ĕçе кĕртсе, Михайлов хăйсен чаçне таврăнат. Хурăнлăх хушшипе анатала анакан ансăр сукмак çĕлен пек авкаланса выртат. Ăна икĕ йенчен те йарапалăн усăннă хурăн çулçисем пĕркесе тăраççĕ. Ытла та чечекĕн ерешленеççĕ çав сарăхнă çулçăсем. Вăл йенне пăхсан, пĕрпĕр сарлака улăх варринчи тăрă кӳлĕ çийĕ хĕвел тухас умĕн илемлĕн чӳхенсе тăнă пек туйăнат. Çурçĕр йенчен акă пĕр сарăм вăрман çилĕ вĕрсе иртет. Сарăхнă çулçăсем татăла-татăла сарă кайăксем пек çĕреле вĕççе анаççĕ.

Кĕркуннехи йулашки ăшă кунсенче шăтса аталаннă çемçе, ачаш курăк темĕнле хăйне уйрăмăн ытла симĕс йешĕрнĕ пек курăнат. Ылттăн сăн-сăпатлă çĕршывăн ытарайми тутлă та сĕтеклĕ сывлăшне вăл пĕтĕм кăмăл хавалĕпе çăтса тăрат.

Каç пулса килет. Тăвăр сукмак Михайлова тĕрлĕ май авкалантарса йертсе кайат: пĕрре чăтлăха кĕрет вăл, унтан хăмăшлă вырăнсен хĕррипе иртсе уçланка тухат, йе пĕр-пĕр сăрт çине улăхат. Сăрт çинчен сайра вăрман урлă инçетри йалсемпе уйрăм пӳртсем курăнаççĕ. Вĕсен çийĕ мамăк пек шурă тĕтĕмпе карăннă. Михайлов пур йенне те пăхса çавăрăнат. Инçетре курăнакан куçпа виçсе илейми уйхир те, унта вырнаçнă шурă çуртсемпе чечен йалсем те, хыçне йулакан вăрман та—пурте ăна хăйĕнни пек туйăнат. Хаљ акă вăл Хĕрлĕ Çарта пурăнат. Хĕрлĕ Çарта вĕрнсе тăван çĕршыва сыхлас чыслăха илме тивĕçлĕ пулнă вăл. Ĕнер анчахха, тăван ашшĕ-амăшĕнчен çыру илсеччĕ. „Çирĕп пул, ывăлăм",—тенĕччĕ ăна ашшĕ çав çырура. Килĕнчен илнĕ çырăва Михайлов, çулпа пынă майăн, тепĕр хут вуласа тухрĕ.

Сукмак пĕр çырма хĕррине йертсе пынă. Çак çырмана çитсен, хăйсемпе кӳршĕлĕ колхозри пĕр старик иртнĕ кунсем çинчен каласа панине аса илчĕ. Вунçичĕ çул кайала мухтавлă буденовцăсем çак вырăнта урнă шур пољаксене хăваласа пынă. Çулахи пĕр уйар кунхине буденовцăсем çак çырма хĕрринче учĕсене кантарма чăраннă. Хĕрлĕ йуланутçăсем шыва кĕрсе тухма шутланă. Кĕпи-йĕмĕсене хывса пăрахма ĕлкĕрнĕ çеç, вăрман йенчен шур пољаксен ертелĕ кăткă пек кĕшĕлтетсе тухнă. Хăйсен умĕнче хĕрлĕ конниксем пуласса аса та илеймен вĕсем. Буденовцăсем шур пољаксене асăрхасанах, шывран сиксе тухнă та, хĕçпăшалĕсене тытса, нимĕн шикленсе тăмасăр, тăшман çине аçа-çиçĕм пек виркĕннĕ. Шур пољаксем хăйсем патнеле вĕççе пыракан йуланутçăсене курсан нимĕн тума пĕлмесĕр аптăраса тăнă. Вĕсене çĕмĕрсе тăкнă çавăн чух.— Ĕмĕрне асран кайми кун. Йуланутçăсен аллинчи çапçутă хĕçсем вутлă-хĕмлĕн çуннă пек йалтăртатса выљаннă...

Лăпкăн йухса выртат тăрă шыв. Вĕтĕ шур чулсем хушшипе иртнĕ чух алла илнĕ кĕмĕл укçа пек чăнкăртатса йанранăн туйăнат шыв йуххи. Михайлов кăштах чарăнса пуçне ухрĕ, питне-куçне çурĕ, вара айакка пăхкаласа илчĕ те, вăрман хĕррипех тӳремĕн кайма шут тытрĕ. Шыв çаплипех лăпкă чĕлхепе калаçса йулчĕ.

Тĕттĕм пулчĕ. Тӳпене çăлтăрсем шăтарса тухрĕç. Каç сулхăнĕ ӳт-пĕве çăмăллăн кăтăкласа çӳçентерет. Инçетрен-инçетрен йыта вĕрни илтĕнетчĕ, часах вăл та шăпланчĕ. Паçăрхи пекех пĕр сас-хура та илтĕнмест. Вăрман шăппăн тĕлĕрет. Уйăрмах тăракан топољсен пашалу пек çулçисем çеç силлене-силлене илеççĕ.

Утнă май пуçа тĕрлĕ шухăшсем пырса кĕреççĕ. Михайлов тăван колхозĕнче йулнă савнине аса илчĕ. Ытла та çывăхра тăрат-çке çав савни тени, асне илмен кун та иртмест. Килес çул акă киле таврăнат вăл. Çĕршыв умĕнче тăракан хисеплĕ тивĕçне тытат. Ун хыççăн киле çитсенех йулташĕсемпе пухăнса чаплă туй туса иртереççĕ, пĕрле пурăнма тытăнаççĕ.

...Сасартăк çак самантра унран инçех те мар типнĕ туратсем хуçкаланни илтĕнсе кайрĕ. Михайлов йĕри-тавра çавăрăнса пăхрĕ—нимĕн те курăнмаст. Кайăксем чаштăртаттарни ун пек илтĕнмеле мар, такам ури сасси пулчĕ пулĕ тесе, чĕрне вĕççĕн утса тунката хыçне пĕшкĕнсе выртрĕ. Нумай та вăхăт иртмерĕ, сулахай йенчен пĕр пилĕк-ултă ура пусăмĕнчех пĕр çын утса пырат. Шăпах вăл тунката умне çитсе пынă чух Михайлов ура çине тăчĕ. Палламан çын ун çине пăхса илчĕ те, нимĕн тума пĕлмесĕр чарăнчĕ. Старик вăл. Унăн хура куçĕсем пĕр вăхăта хĕмленнĕ пек пулчĕç.

— Сывлăх сунатăп, йулташăм, табак туртасшăн та, шăрпăк пулмĕ-ши санăн?—терĕ старик Украинла чĕлхепе

— Туртмастăп епĕ,—ответлерĕ Михайлов. Йут çын илтмĕш пулса малала кайма шут тытрĕ.

Михайлов чĕринчи вĕри йун тапса тухас пек вĕреме пуçларĕ. „Аçта тата мĕн тума кайтăр вăл каçа хирĕç?"—ыйтрĕ вăл хăйĕнчен хăй. Сахал-им çавăн йевĕр сăмах хускатса хăйсене сарăмсăр тытма шутлакан тăшманла çынсем.

— Ан кай-ха, старик, кăтартсам документсене,— терĕ вăл уçă сасăпа.

— Акă документсем!—терĕ те, старик питĕнчен шăршламали тапакпа сапрĕ. Хăй çав вăхăтра тарма пуçларĕ. Михайлов ăна хăвалама тытăнчĕ. Вăрмантан тухсан старик çырма тăрăх чупса пытанма ĕмĕтленнĕччĕ пулас, йепле-майпа колхоз итемĕ патне çывхарнине те аса илеймерĕ. Колхоз итемĕ сăрт çинерех. Унта çапман капансем пайтах. Çавсен хушшине кĕрсе çак „чăрсăр красноармеецран" хăтăласшăнччĕ вăл.

Итем çине çитсен Михайлов тепĕр хутчен сикрĕ те старике ĕнсинчен йарса илчĕ. Ывăнса çитнипе иккĕшĕ те çĕре талпăнса ӳкрĕç. Çĕре хăвăрт ӳкнĕ пекех ура çине те час тăчĕç.

Михайлов сывлăшне аран çавăрса илсе:

— Куçа тапак сапан иккен,—терĕ хăвăрттăн сывласа. Çилленнипе тухакан сăмахсем шăл витĕр тăкăскăн сăрхăнаççĕ.

Шăпах çак вăхăтра итем хуралçи те çитсе чарăнчĕ. Малтанах вăл, красноармейецпа старик хулран хула тытăçнине курсан, нимĕн те ăнкарса илеймерĕ. Старик аллинче çап-çутă кинжал йăлтăртатсан çеç ĕç урăхла май пынине туйса илчĕ те красноармейеца пулăшма пычĕ.

— Йар-р!—тесе кăшкăрчĕ старик. Хуралçă унăн кинжал тытнă аллине хыçалала пăрса хирĕнтерчĕ. Ирсĕр старик тинех парăнса çĕре çавăрăнса ӳкрĕ.

Михайлов ик-виç сăмахпа çак палламан çын çинчен каласа хуралçа тĕлĕнтерчĕ. Хуралçă çакăн пек ирсĕр çын çине çиллине шăнараймасăр старике сухалĕнчен йарса тытрĕ çеç,—кĕреçе пек илемлĕ кăтра сухал хăйпăнса ӳкрĕ.

— Маскă!—терĕ хуралçă çак чейе „старик" çине пăхса. Вĕсен умĕнче 30—32 çулхи çамрăк çын пулса тăчĕ хайхи „старик".

— Калăр мĕн чухлĕ укçа кирлĕ сире? Кирлĕ чухлĕ паратăп. Анчах мана киле таврăнма ан чăрмантарсамăр. Укçа пурри те сире ытлашши пулмĕ...

Совет çĕршывĕн патриочĕсене укçа парса ултталаймăн! Вĕсемшĕн чи хаклиї вăл—тăван çĕршыв. Укçа илсе çакăн пек хура йунлă тăшмана вĕçертмеле-и? Çук, Михайлов та, колхоз хуралçи те йуратнă çĕршывне улталас çук. Хăйсен телейлĕ пурнăçĕне кунçул савăнăçне нимĕскерпе те улăштармаççĕ вĕсем.

Иккĕшĕ те пиçиххийĕсене салтса илсе ирсĕр тăшманăн аллисене хыçалала тыттарса вĕçерĕнми çыхрĕç те, вара Михайлов хăйех ăна çывăхри заставăна илсе кайрĕ.

Шурăмпуç хăпарчĕ. Тӳпери çăлтăрсем савăнăçлăн выљанă пек йăлтăртатаççĕ. Вăрман çине çутă уйăх та çĕкленчĕ. Айакран прожектор çутисем курăнаççĕ. Çуталакан пĕлĕте каскаланă пек туйăнат прожектор çути. Чикĕ—çирĕп сыхлăхра.

ССР Сойузĕн Верховнăй Совет Президиумĕн УКАЗĔ

„Ленин в Октябре", „Петр Первый" тата „Богатая невеста" кинофиљмсенче уйрăмах палăрнă работниксене наградăсем парасси çинчен

Куракансем пĕрщухăшлăн ырланă чаплă кинофиљмсем: „Ленин в Октябре", „Петр Первый" тата колхоз пурнăçĕ çинчен „Богатая невеста" фиљм кăларнă май уйрăмах палăрнă режиçсорсене, сценаристсене, артистсене, монтажерсене тата стахановец-рабочисене çакăн пек наградăсем парас:

Ленин орденĕ

1. Б. В. Шчукина—„Ленин в Октябре" кинокартинăра В. И. Ленин рољне выљакан артиса.
2. М. И. Ромма—„Ленин в Октябре" кинокартинă режиççорне.
3. А. Й. Каплера—„Ленин в Октябре" кинокартинăн сценари авторне.
4. А. Н. Толстойа—„Петр Первый" кинокартинăн сценари авторне.
5. В. М. Петрова—„Петр Первый" кинокартинă режиççорне тата сценари соавторне.
6. Н. К. Симонова—Петр Первый рољне выљакан артиса.
7. И. А. Пырйева—„Богатая невеста" кинокартинă режиççорне.

Ĕçлĕх Хĕрлĕ Йалав орденĕ

1. М. И. Жарова—„Петр Первый" кинокартинăра Мењшиков рољне выљакан артиса.
2. Н. К. Черкасова—„Петр Первый" кинокартинăра Алексей рољне выљакан артиса.
3. Н. П. Охлопкова—„Ленин в Октябре" кинокартинăра Василий рољне выљакан артиса.
4. Б. И. Волчека—„Ленин в Октябре" кинокартинă операторне.
5. В. В. Гарданова—„Петр Первый" кинокартинă операторне.
6. Н. Г. Суворова—„Петр Первый" кинокартинă художникне.
7. А. Д. Йермолова—„Ленин в Октябре" кинокартинă художникне-гримерне.
8. Й. М. Помещчикова—„Богатая невеста" кинокартинăн сценари авторне.
9. Б. Безгина—„Богатая невеста" кинокартинăра Згара тракторис рољне выљакан артиса.
10. М. А. Ладынинăна—„Богатая невеста" кинокартинăра „Богатая невеста" рољне выљакан артискăна.

„Знак Почета" орденĕ

1. А. К. Тарасовăна—„Петр Первый" кинокартинăра Йекатеринă рољне выљакан артискăна, малтан Ĕçлĕх Хĕрлĕ Йалав орденĕ парса наградăланăскерне.
2. В. А. Кузнецова—„Ленин в Октябре" кинокартинăна ӳкерни чухне çӳтатас тĕлĕшпе ĕçленĕ техноруководителе.
3. Н. Г. Петровăна—„Ленин в Октябре" кинокартинă негативĕн монтажницине.
4. И. И. Авдейева—„Ленин в Октябре" кинокартинăн декорацине тăвас тĕлĕшпе ĕçленĕ рабочи-стољара.
5. З. И. Залкинда—„Петр Первый" кинокартинăн звукооператорне.
6. И. А. Љубезнова—„Богатая невеста" кинокартинăра счетовод рољне выљакан артиса.
7. А. М. Дмоховскайăна—„Богатая невеста" кинокартинăра бригадирша рољне выљакан артискăна.
8. А. Антонова—„Богатая невеста" кинокартинăра бригадир рољне выљакан артиса.

ССР Сойузĕн Верховнăй Совечĕн хисеплĕ грамăти

1. М. И. Степанова—„Ленин в Октябре" кинокартинăна тăвас çĕрте ĕçленĕ стољар-стахановеца.
2. К. Г. Бурмистрова—„Ленин в Октябре" кинокартинăна тăвас çĕрте сменнăй маçтăр пулса ĕçленĕскерне.
3. М. И. Переслегинăна—„Ленин в Октябре" кинокартинă монтажницине.
4. Н. П. Кертенса—„Петр Первый" кинокартинă звукомонторне.
5. М. П. Мартышкинăна—„Петр Первый" кинокартинăна тăвас çĕрте закройщчицă пулса ĕçленĕскерне.

ССР Сойузĕн Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

ССР Сойузĕн Верховнăй Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремљ.
1938 çулхи мартăн 23-мĕш.

ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнче Кинематографи ĕçĕсен Комитетне организацилесси çинчен

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ кинематографи ĕçне лайăхлатас тата йертсе пырассине пĕрлештерес, кинофикаци ĕçне, кинофиљмсене тăвас ĕçе тата вĕсемпе усă курассине йĕркелес тĕлĕшпе ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнче Кинематографи ĕçĕсен Комитетне тăвасси çинчен постановлени йышăннă.

ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи Кинематографи ĕçĕсен Комитечĕ çине кинематогрфин пĕтĕм ĕçĕсене йертсе пырассине, кунпа пĕрлех кинокартинăсене тăвассине, пĕтĕм ССР Сойузĕнчи кинофикацине кинокартинăсемпе усă курас ĕçе йертсе пырассине хунă.

Сойузлă тата автономлă республикăсен Халăх Комиссарĕсен Совечĕсемпе крайсенчи тата облаçсенчи Ĕçтăвакан Комитетсем çумĕнче Кинематографи ĕçĕсен Комитечĕн органĕсем пулса тăракан кинофикаци управленийĕсем пулаççĕ.

РСФСР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи кинофикаци управленийĕ пĕтет. Унăн ĕçĕсене ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи Кинематографи ĕçĕсен Комитечĕ çине хунă.

Кинематографи ĕçĕсен Комитечĕ çумĕнче сойузлă республикăсен представителĕсенчен Совет тума йышăннă.

Совет умне кинокартинăсем тăвас ĕçен пĕтĕмĕшлĕ тата тематикăлă планĕсене пăхса тухас, кинофикаци тата картинăсемпе усă курас, çак плансене республикăсен нацилĕ уйрăмлăхĕсемпе çыхăнтарас задачăсене лартнă.

* * *

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çавăн пекех тата кинокартинăсен производствине организацилессине лайăхлатасси çинчен постановлени йышăннă.

(ТАСС).

Федоров бригади 250 процент тултарчĕ

Шурккари „Победа" колхоз (Шупашкар р.) вăрманпромхозпа 1938 çулта 870 кубла метр вăрман турттарма, 625 кубла метр касса хатĕрлеме договор тунă.

Колхоз правленийĕ вăрман хатĕрлевĕнчи ĕçе тĕрĕс организацилерĕ. Бригадăпа бригадă, колхозникпа колхозник ăмăрту пуçарса йачĕç. Çавна пула пайанхи куна 937 кубла метр турттарса плана 110 процент тултарчĕ. Плана касса хатĕрлессипе те 100 проценчĕпех пурнăçланă. Вăрман хатĕрлес ĕçре уйрăмăнах Федоров бригади стахановла ĕçлет. Вăл бригадă хăйĕн планне 250 процент тултарнă.

Василйев.

Иккĕмĕш хут пулăшу илтĕмĕр

Епĕр, Мартынкассинчи (Трак районĕ) „Хĕрлĕ Хĕвелтухăç" колхоз членĕн Никифор Йаковлевăн ачисем, семйере ачасем нумай пирки мартăн 15-мĕшĕнче государствăран иккĕмĕш хут 2000 тенкĕ укçан пулăшу илтĕмĕр. Пире аттепе анне вăл укçапа тăхăнмали йапаласем, вĕренмели хатĕрсем—кĕнекесем, хут-кăранташсем илсе пачĕç. Çакăншăн епĕр пит хĕпĕртетпĕр. Шкулта отлично вĕренме тăрăшатпăр. Нумай ачалă амăшсене пулăшу памала тунăшăн хамăрăн партине, правителствăна, йуратнă çулпуçне Сталин йулташа пĕтĕм çемйепе тав тăватпăр.

И. Никифоров.



ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: республикăлă Испани çарĕн боецĕсем вĕсем пырачченпытанса пурăннă ачасене шыв параççĕ. (Сойузфото)

Испанири фронтсенче

Мартăн 23-мĕшĕнче пăлхавçăсем Хĕвелтухăç фронтĕнче тĕрлĕ районсенче атакăсем тунă. Пăлхавçăсем Ебро йатлă йуханшыв урлă каçса, Пина тата Велиљйаде Ебро йатлă йалсене (Сарагосăран Кантăрпа Хĕвелтухăçнеле) йышăннă.

Уескă районĕнче фашиссене танксемпе кавалери пулăшнă. Кунта фашиссем чи пирвайхи хут тĕтĕм йарса, вăрçнă чухне тĕтĕмпе усă курнă. Республикă чаçĕсем Тардиентапа Сангарренрен тухса кайнă.

Ваљдеаљгорф секторĕнче (Аљканьиз патĕнчерех) республиканецсем тăшман атакине сирсе пăрахнă. Вĕсем итаљйанецсен „черные стрелы" текен дивизинпĕр ротине пĕтерсе тăкнă. Вăрçă хатĕрĕсем тата пулеметсем нумай туртса илнĕ. Фашиссем ку секторта атакăсем тума хăтланнине республикă чаçĕсем сирсе пăрахнă.

Испанин Еспањ агентстви пĕлтернĕ тăрăх, республикă çарĕсем Каталонипе Валенçи патĕнчи сăрттулă вырăнсенче хăйсен позицисене хытăнах çирĕплетнĕ.

Агентствă-палла тунă тăрăх, республикăн çар çыннисем малашнехи пулас вăрçă ĕçĕсене ним хăрамасăрах кĕтеççĕ, мĕншĕн тесен йулашки вăхăтра тăшман кăштах малала кайнă пулсан та, вăл вăрçă ĕçĕсем тĕлĕшпе питех те кирлĕ позицине илеймennине вĕсем пĕлсе тăраççĕ.

(ТАСС).

Италипе Германин Испанири интервенцийĕ

Испанире республикă çарĕ икĕ çула йахăн ĕнтĕ фашисла пăлхавçăсемпе кĕрешет.

Йутçĕршывсенчи фашисла интервентсем пăлхавçăсене пулăшса тăмасан, çак кĕрешӳ тахăçанах республикăлă Испани çĕнтернипе пĕтнĕ пулĕччĕ. Пăлхавçăсен пуçлăхĕ генерал Франко пăлхав пуçланçанах Италипе Германирен çарсемпе, тĕрлĕ хĕçпăшалсемпе, самољотсемпе, танксемпе тата тупăсемпе пулăшу илсе тăма пуçларĕ.

Фашисла интервентсем хăйсен регуљарлă çарĕсем Испанири вăрçăра тӳремĕн хутшăнса вăрçнине малтан пытарчĕç. Анчах та вĕсен маскине часах сирсе пăрахнă. Фашисла интервенци Испанире уççăнах вăрçать. Муссолини хăйĕн йулашки хут тухса каланисенчен пĕринче Итали çарĕсем Испанире тăнипе тата вĕсем Испани халăхне хирĕç вăрçнипе тӳрех мухтаннă.

Испанире Италипе Германи интервенцийĕ вăйланни Англипе Франци уççăнах чармасăр тăнипе пулса пырать. Вĕсен Испанири ĕççене „хутшăнмала мар" текен политики çакăн патне илсе пычĕ. Гитлерпа Муссолини Франко генерала пулăшма вăрçă хатĕрĕсемпе çарсем мĕн чухлĕ йарса парас тенĕ, çавăн чухлех тата пĕр чарусăр йарса парса тăраççĕ. Çав вăхăтрах тата „хутшăнмала мар" текен политикăна пулах республикăлă Испанин саккунлă правителстви хăйĕнпе кӳршĕ çĕршывсенчен хĕçпăшалсем илме пултараймасть.

Фашисла çĕршывсен Испанире уççăнах туса пыракан интервенцийĕ уйрăмах йулашки кунсенче анлăн сарăлса пырать. Испанин кăнтăр йенчи порчĕсене, пăлхавçăсемпе интервентсен влаçĕсен аллинче тăракан портсене, йулашки ернесенче Италин вăрçă хатĕрĕсем тийенĕ парохочĕсем тата Италин регуљарлă çарĕн техникăлă тата çуранçар чаçĕсем илсе пыракан парохочĕсем вуншарăн çитсе тăраççĕ. Англи хаçачĕсем пĕлтернĕ тăрăх, йулашки ернесенче Италирен сахалтан та 50 пин çар Испанине ăсатнă. Италин Майоркă утравĕ (Испанирен инçех мар) çинчи тата Испанири сывлăш базисенче бомбардировщчиксемпе истребителсем çĕршерĕн шутланаççĕ. Вĕсен екипажĕсем итаљйанецсенчен тăраççĕ. Нумайах пулмасть Муссолини Франко генерала тăвата миноносец панă тата республиканецсем пăлхавçăсенне шыва путарнă „Балеарес" йатлă крейсерĕ вырăнне тепĕр крейсер пама пулнă.

Фашисла Германи йулашки уйăхсенче Испанири пăлхавçăсем патне 550 самољот, 550 оруди тата 6 пин пулемет йарса панă. Германи Испанине вăрçă хатĕрĕсемпе çарсем уйрăмах йулашки вăхăтра нумай йарать. Март пуçламĕшĕнче Германирен снарйадсем, артиллери, танксем, авиаци бомбисем тата ытти вăрçă хатĕрĕсем тийенĕ пароходсене Испани пăлхавçисем патне вуншарăн ăсатнă. Март уйăхĕн варринче Испанин çурçĕр йенчи çыранне фашиссен йатарласа вĕрентнĕ çарĕсене пурĕ 30 пин илсе çитернĕ. Вĕсен пĕр пайĕ пăлхавçăсем йышăннă территоринче, Франци чикки тăрăх вырнаçнă.

Илсе пынă вăрçă хатĕрĕсен тата йутçĕршывсен фашисла çарĕсен пысăк пайне Хĕвелтухăç фронтне унта республикă халăх çарне хирĕç наступлени тума йанă. Ку фронтра наступлени тăвас çĕрте пăлхавçăсемпе интервентсен çарĕсене Итали генералĕсем йертсе пыраççĕ. Республикăлă Испанин оборонă министерстви палăртса çирĕплетнĕ тăрăх, Германин Испанире вăрçакан сывлăш вăйĕсене тата Германин йатарласа тунă çар чаçĕсене Германин фашисла генералĕсем Зандерпа Вейдт йертсе пыраççĕ.

Испани халăх çарĕ пăлхавçăсемпе интервентсем çĕнĕрен наступлени тунине паттăрăн сирсе пырать. Республикă халăх çарĕ çулталәк çурă ĕнтĕ пăлхавçăсемпе интервентсене Мадрида пырса кĕме памасăр, тытса чарса тăрать. Иртнĕ çулта вăл Гвадалахарă фронтĕнче Итали çарĕсен корпусне пĕтĕмпех çĕмĕрсе тăкма пултарчĕ. Иртнĕ çулхи декабĕрте вăл Теруел хулине пăлхавçăсенчен сакăр кун хушшинче туртса илме пултарнă. Кайран пăлхавçăсемпе интервентсем хăйсен вăйĕсене пĕрлештерсе, пысăк çухатусем туса, икĕ уйăх хушши çапăçнă хыççăн ăна республиканцăсенчен туртса илнĕ.

Халĕ Испани республикĕн халăх çарĕ вĕçне çитиех хĕçпăшалланнă пăлхавçăсемпе интервентсен наступленине пархатарлăн сирсе пырать. Испани халăхĕн фашисла захватчиксене хирĕç туса пыракан паттăрла кĕрешӳне етемлĕхĕн малта пыракан пĕтĕм çыннисем хĕрӳлĕн хапăлласа тăраççĕ.

Çилтăвăл лăпланнă

БАКУ, мартăн 20-мĕш. Мартăн 19-мĕшĕнче çĕрле Апшеронра çурçĕр йенчен вĕрекен 10 баллă çилтăвăл пуçланса кайнă, вăл талăкĕпех чарăнмаи. Çилтăвăл нефть промыслисене йĕркелĕ ĕçлеме чарса лартнă, чылай вышкăсене ӳпĕнтерсе йанă, çӳлĕ вољтлă електролинисене сийен тунă. Уйрăмăнах „Молотовнефть" тресчĕ пысăк сийен курнă. Унта 64 нефть скважини чарăнса ларнă.

Çилтăвăл лăпланнă. Сийенленнисене чылайĕшне йусаса йĕркеленĕ ĕнтĕ.

(ТАСС.)

Çĕнĕ кĕнекесем

Икĕ революционерăн кунçулĕ

Çак кунсенче Чăваш государствă издателствинче çакăн пек çĕнĕ кĕнекесем пичетленсе тухнă:

1) **И. Ф. Дубровинский.** Кĕнекепе Ц. Зеликсон-Бобровскайа çырнă. Хакĕ 25 пус. Тираж 4.000 екз.

Иосиф Федорович Дубровинский—пролетарилĕ революционер, пирĕн парти строителĕсенчен пĕри, унăн организаторĕсенчен пĕри, вăл Владимир Илйич Ленинăн çывăх тусĕ (партири йат унăн „Иннокентий" пулнă). Дубровинский 1913 ç. ийуњ уйăхĕнче вилнĕ. Партине организацилес ĕçре вăл 20 çул хушши канма пĕлмесĕр хастарлăн ĕçленĕ. Халăхсен çулпуçĕ И. Сталин йулташ Дубровинский çинчен çапла каланă: „хамăн пур паллакан организаторсенчен епĕ—Ленин хыççăн—пирĕн парти мухтанма пултармала тата мухтанма тивĕçлĕ икĕ организатора пĕлетĕп: Туруханри ссылкăра вилнĕ И. Ф. Дубровинскине тата партипе государствă строителствинчи ĕçре çунса кайнă И. М. Свердлова".

2) **И. В. Бабушкин.** Кĕнеке авторĕ—П. Зеликсон-Бобровскайа. Хакĕ 25 пус. Тираж 4.000 екз.

Иван Василйевич Бабушкин Ленинăн малтанхи ученикĕсенчен пĕрийĕ пулнă, реакци вăйлă пулнă çулсенче Бабушкин йулнă патша влаçĕпе паттăрăн тата хăйулă кĕрешнĕ. Унăн пурнăçĕ—профессионаллă революционерăн пурнăçĕ пулнă. Партипе рабочи класшăн вăл, хăйĕн пурнăçĕ çине çавăрăнса пăхмасăр, хытă тăрăшнă.

Бабушкина патша палачĕсем персе вĕлернĕ. 1906 çулти йанварĕн 1-мĕшĕнче каçхине Бабушкин хăйĕн пилĕк йулташĕпе пĕрле Читаран Иркутска хĕçпăшал турттарса пынă. Слудйанкă стачи патĕнче вĕсене каратељнăй отрйад хăваласа çитсе, суд тумасăрах тискеррĕн персе пăрахнă. Персе вĕлерес умĕн Бабушкин хăйĕн йатне те пĕлтермен, хăйĕн çинчен никама пĕлтермесĕрех масара кĕнĕ.

Владимир Илйич Ленин хăйĕн çывăх ученикĕ, тусĕ, бољшевик Бабушкин вилĕмĕ çинчен чĕрене ыраттаракан хуйхăпа çакăн пек çырнă:

„...Халăх паттăрĕсем пур. Вĕсем Бабушкин йевĕрлĕ çынсем. Вĕсем пĕр çул, икĕ çул кăна мар, революци умĕн 10 çул хушши хăйсене пĕтĕмпех рабочи класа, ирĕке кăларассишĕн кĕрешес ĕçе панă... Патша самодержавинчен кĕрешсе илнисене пĕтĕмпех Бабушкин пек çынсем йертсе пынă массăсем кăна кĕрешсе çĕнсе илнĕ. Ун пек çынсем пулмасан вырăс халăхĕ ĕмĕрлĕхех чурасен халăхĕ, тарçăсен халăхĕ пулса йулнă пулĕччĕ. Ун пек çынсемпе вырăс халăхĕ хăй тĕрлĕрен експлоатацинчен ирĕке тухассине кĕрешсе илĕ".

Çак çӳлте асăннă икĕ кĕнекере автор И. Ф. Дубровинскипе И. В. Бабушкин революционерсен пурнăçĕ çинчен, вĕсем социалисăмла революци ĕçĕшĕн мĕнле кĕрешни çинчен, хăйсен ĕçĕсенче мĕнле хĕн-асап курнисем çинчен çырнă.

Чăваш государствă издателстви пит чаплă та мухтавлă революционерсем çинчен çакăн пек биографилĕ очерксем чăвашла кăларма пуçланине хапăлламала. Çакă вăл чăваш ĕçхалăхне социалисăмлă аслă революци тата парти ĕçĕшĕн кĕрешсе вилнĕ паллă революционерсемпе тачăн паллашма май парать.

Куçарасса кĕнекесене çăмăл, пурне те ăнланмалла чĕлхепе куçарнă. Çак кĕнекесене епĕр кашни ĕççыннине вуласа тухма сĕнетпĕр. Вĕсене кĕнеке сутакан магазинсенче илме пулать.

Йехрим Иванĕ.

Тăрăшса ĕçлекен почтаљйон

Йелчĕк районĕнчи „Осоавиахим" колхозри Орлов колхозник кăçалхипе вунпĕр çул ĕнтĕ почтаљйонра ĕçлет. Хаçат-журнал сарас плана çулсернех тултарса пынă.

Çавăн пекех 1938 çулхи пĕрремĕш квартăл планне те вăл 157 процент тултарнă. Халĕ вăл çӳрекен йалсенчи 412 хуçалăха мĕн пурĕ 837 екземпљар тĕрлĕрен хаçат-журналсем пырса тăраççĕ. Иккĕмĕш квартăлта Орлов йулташ тата лайăхрах ĕçлеме пулчĕ, хăй пек ĕçлеме республикăри почтаљйонсене ăмăртăва чĕнчĕ.

Гер. Иванов.

Отличнă вĕренме тăрăшатпăр

(Красноармеецсен çырувĕ)

ЛЕНИНГРАД. Епĕр кунта Чăваш республикĕнчен килнĕ красноармейецсем чылайăн вĕренетпĕр. Пурнăç аван, вăхăт иртни те сисенмест. Канăçлă вăхăта савăнăçлă ирттеретпĕр, час-часах кино кăтартаççĕ, театрсене, музейсене, циркsene кайса куратпăр.

Çар ĕç техникине алла çавăрса илессишĕн пĕтĕм хастарлăхпа кĕрешетпĕр. Чăваш республикинчен килнĕ çамрăксенчен те отличнă вĕренекенсем пур. Ишлей районĕнчи Анаткас йалĕнчи колхозник Павел Симаков отличнă вĕренет. Çавăн пекех Д. Курбатов, Григорий Петров йулташсем те отличнă вĕренсе пыраççĕ. Красноармейецсен клубĕнче епĕр чăвашла йурăсем йурласа паратпăр. Епĕр Хĕрлĕ Çара килме хатĕрленекен допризывник йулташсене хастарлăн вĕренсе пĕлӳве ӳстерме чĕнетпĕр.

Р. Йегоров.
И. Кузьмин.
И. Иванщчиков.

1.350 тенкĕлĕх сарнă

КАНАШ. Педучилищчăра вĕренекенсем Осоавиахимăн 12-мĕш лотерейă билечĕсене 1.350 тенкĕлĕх сарнă.

Уйрăм студентсем—Староверов, Вайцев т. ыт. те 20—25-шер тенкĕлĕх çыраннă. Билетсем сарас ĕçре Осоавиахим организацийĕ лайăх ĕçлет.

Педучилищчăри Осоавиахим организацийĕ 388 çынна пĕрлештерсе тăрать. Вĕсенчен 64 член—ВС, 24 член—ГТО, 149 член—ПВХО значокĕ илнĕ.

И. Давыдов.

Пулни-иртнисем

●●Куснар йалĕнчи А. Г. Григорйев тата Çĕнйалти (Шупашкар р.) Ив. Косарев 1937 çултан пуçласа вăрă ĕçĕпе пурăннă. Пĕлтĕртенпе вĕсем пурĕ 51 çĕрте çаратнă. Халĕ вĕсене иккĕшне те суд туса 5-шер çуллăха тĕрмене хупнă.

●●Мартăн 17-мĕшĕнче Çĕрпӳри райторг ларйокĕн пуçлăхĕ А. Ф. Федоров лавка укçине 3.000 тенкĕ вăрласа тарнă пулнă. Мартăн 21-мĕшĕнче уголовнăй розыск ăна Шупашкарта тытнă. Виçĕ кун хушшинче вăл 2. 000 тенкĕ расхутлама ĕлкĕрнĕ. Федорова арĕслесе суда панă.

Суд

Ача вĕлернĕшĕн

ШĂМĂРШĂ. Кивĕ Шăмăршă йалĕнчи Александрă Петровă хăйсен йалĕнчи Иван Мироновпа пурăнса йăвăр çын пулнă.

1937 çулхи октабĕрĕн 20-мĕшĕнче Александрă Петровă ача çуратнă. Ача çуратнине çынсене пĕлтерес мар тесе, ачана майĕнчен пăвса вĕлернĕ те анкартине çĕр-улми ани çине çĕр чавса пытарнă. Петровăн тискер ĕçĕ çинчен следстви органĕсем сиссе, ачана пытарнă çĕртен туптарнă. Врачсем пăхнă хыççăн, ача чĕрĕ çурални, ăна пăвса вĕлерсе пытарни палăрнă.

Çак ĕçе мартăн 18-мĕшĕнче Шăмăршă районĕнчи халăх сучĕ пăхса тухса, Петровăна ачана пăвса вĕлернĕшĕн Уголовлă Кодексăн 136 статйипе айăпласа 5 çул хушши тĕрмере хупса усрамала турĕ.

Й. Филиппов.

Хроникă

ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ С. С. Дукељский йулташа ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи Кинематографи ĕçĕсен Комитет председателĕ пулма çирĕплетнĕ.

(ТАСС)

Ответлă редактор Н. М. СЕМЕНОВ.

Академи театрĕнче

Мартăн 26-мĕшĕнче

Вырăсла спектаљ

Н. В. Гогољ

РЕВИЗОР

(5 пайлă комеди)

Аслă режиççор Г. В. СТРАНСКИЙ лартать.

Художник И. Н. САПОЖНИКОВ.

Талон № 148.
Абонемент № 9, талон № 14.

АНОНС! П. Н. Осипов АЙДАР

Рахманов ПРОФЕССОР ПОЛЕЖАЕВ

лартма хатĕрленеççĕ.

„Чăваш Коммунĕ" çырăнса илмелли хаксем: 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвĕсене каялла памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 150. Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 197. Тираж 15.665 25—94 см. 1—1 п. л.